ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

# Тантăш

6+

48 (4410) №, 2014, ноябрь /чӳк/, 27
(1931 çулхи январĕн /кăрлачăн/ 12-мĕшĕнче тухма тытăннă).

Хакĕ ирĕклĕ.
Индексĕ: 54802.

ÇĔНĔ ĂРУ

## Асамлă хими

**Шкулти чи йывăр предметсенчен пĕри – хими. Çав вăхăтрах вăл асамлăхпа тулнăн та туйăнать. Менделеев таблицинех илер. Паллă ăсчаха тĕлĕкре курăннă-çке вăл. Кашни элеменчĕн хăйĕн вырăнĕ пур. Водород, литий, берилий, бор... Шăпах çакăнтан пуçланать те хими асамлăхĕ. Унтан вара – чуна илекен уравненисем... Анчах ку та хăйне май илĕртет. Шывра хăйăр ирĕлменнине манса кай кăна, ĕçе йăнăш пурнăçлатăн. Мĕн çунтарсан мĕнле газ тухнине те çырсах шухăшласа тупатăн.**



Урокра сăнав тăвассине пĕлсен вара ачасен кăсăклăхĕ татах та ӳсет. Акă хальхинче те Фаина Егоровна Петрова вĕрентекен сĕтел çине ятарлă приборсем кăларса лартсан вуннăмĕшĕнчи Саша Чернов чи малтан чупса тухрĕ, вĕрентекене пулăшма васкарĕ. Ун хыççăн ыттисем те пуçтарăнчĕç.

– Ачасем урока интересленсех çӳреççĕ. «Питĕ йывăр, вĕренес килмест», – текен çук. Пĕлменнине пур пĕрех ăнланма тăрăшаççĕ. Химипе пĕрлĕхлĕ патшалăх экзаменĕ тытакансем кашни çулах пулаççĕ. Пĕлтĕр, сăмахран, çичĕ вĕренекене хатĕрлерĕм, пурте экзамена ăнăçлă тытрĕç, – савăнать çак ĕçре çирĕм пиллĕкмĕш çул вăй хуракан Фаина Егоровна.

Унăн вĕренекенĕсем районти олимпиадăсенче тăтăшах çĕнтереççĕ, республикăра иккĕмĕш вырăн йышăнни те пулнă. Хими енĕпе аслă пĕлӳ илекенсем сахал мар. Кăçал шкул пĕтерекенсенчен Таня Шустовăпа Оля Уляндина тата Катя Васильева та çав çулах суйласшăн. Çавăнпа Фаина Егоровна вĕсемпе уроксем хыççăн юлса тĕплĕнрех те ĕçлет.

Паллах, вĕрентекенĕн практика ĕçĕсене кăсăклăрах ирттерес килет. Анчах укçа-тенкĕ çитменни чăрмантарать, лабораторие пуянлатма ансатах мар çав. Республика тата Раççей шайĕнчи ăмăртусене хутшăнас тесен вара кĕнекере çырса панине аван пĕлни çеç сахал, çавна ĕçпе те кăтартса памалла.

*Лариса ПЕТРОВА.*

Çĕмĕрле районĕ,
Хутар шкулĕ.

АННЕ КУНĔ

## Чи хакли – ăшă СĂМАХ

Çĕршывра Анне кунне палăртма тытăннăранпа вăхăт нумай иртмерĕ. Апла пулин те унăн сумĕ питех те пысăк. Çĕр чăмăрĕ çинчи чи хаклă та çывăх çынна саламласси – сăваплă тивĕçсенчен пĕри. Çулсерен ноябрĕн юлашки вырсарникунĕнче паллă тăваççĕ çак уява.

Кашниех пирĕнтен анне варĕнче тĕвĕленсе çут тĕнчене килет. Пепке ача пулса, çын пулса çитĕнет. Анне куç хупмасăр, канăça çухатса кашниншĕн тăрăшать. Çак кун аннĕрсене ăшă сăмахсемпе йăпатма тăрăшăр. Уявра кăна-и? Вĕсем пирĕнтен ялан лайăххине çеç кĕтеççĕ. Ыррине парнелесен, савăнăçпа хĕпĕртеттерсен тем пекех кăмăллă пулĕччĕç вĕсем.

Çак кун вăл мĕн тери ырă çын пулни çинчен пĕр-икĕ сăмах каласан, эсĕ ăна пуринчен те ытла юратнине систерсен, ăна нимĕнрен те хаклă çын вырăнне хунине пĕлтерсен анне тем пекех савăнĕ. «Юратнă аннеçĕм! Тавах мана çут тĕнче парнеленишĕн, телейлĕ ачалăхшăн. Эпĕ санпа чухне хама яланах лăпкă туятăп!» – теме çеç ан ӳркен. Вăрăм та телейлĕ кун-çул сунсан унăн чун-чĕри татах та пушшех çемçелĕ. Кирек мĕнле йывăр самантра та пулăшма пултарнине туйсан анне татах та савăнĕ. Хăв тĕрлĕ хутран та пулин тунă чечек çыххи те, эсĕ компьютер пулăшнипе çемье çинчен хатĕрленĕ презентаци те е урăх мĕн те пулин – чи хаклă парнесен вырăнĕнче пулĕç.

Нумай чухне анне тĕрлĕ уява хăй хатĕрленет, çемье кĕрекине тултарма тăрăшать. Атя–ха, тусăм, хальхинче эсĕ ăна кăшт та пулин канса илме май туса парсам. Анне хăв аллупа хатĕрленĕ парнешĕн, открытка çырса парнеленĕшĕн тем пекех савăнассине те ан ман.

Чи хакли вара – ăшă СĂМАХ. Анне халалланă, эсĕ чĕререн тухакан каланă çепĕç СĂМАХ.

(Тема тăсăмĕ 5, 8-9-мĕш стр.)



*© Татьяна СЕМЕНОВА (Шупашкар, 49-мĕш шкул) сăнӳкерчĕкĕ.*

### Çывăх çыннăм

Ман аннеçĕм тăрăшулла,
Пур ĕçре те пултарулла.
Ĕç вĕçлесен каçхине
Шăрантарать юррине.

Анне пире юратать,
Ачаш сăмахсем калать,
Ăшшăн-ăшшăн ыталать,
Сурăмран мана лăпкать.

***Надежда СЕРГЕЕВА,***
***3 класс.***

Çĕмĕрле районĕ,
Хутар шкулĕ.

# Тĕрлĕрен: вула та пĕл

## ПĔР ШКУЛТАН ХЫПАРЛАÇÇĔ

### Хамăн яла юрататăп!

Манăн тăван ял Шăмалăх ятлă. Вăл хитре вырăнта вырнаçнă. Йывăç-тĕмпе пуянскер çулталăкăн кашни вăхăтĕнчех хăйĕн илемĕпе савăнтарать. Ялтан инçех мар кÿлĕ пур. Хĕлле эпир унта конькипе ярăнатпăр, çулла пулă тытатпăр. Питĕ аван кÿлĕ хĕрринче!

Шăмалăхра икĕ урам. Ял-йыш сахал пулсан та вăл пĕр-пĕринпе туслă пурăнать. Çынсем яланах пĕр-пĕрне пулăшма хатĕр.

Эпĕ хамăн яла юрататăп!

### Шанчăклă юлташ

Манăн туса Муркка тесе чĕнеççĕ. Вăл çутă-хăмăр тĕслĕ. Эпĕ ăна тутлă апатпа сăйлатăп. Вăл вара кăмăллăн мăрлатса мана тав тăвать.

Эпир Мурккăпа выляма юрататпăр. Ирхине вăл мана шкула ăсатса ярать. Уроксем хыççăн кил умĕнче кĕтсе илет. Çемçе тусăм мана нихăçан та пăрахса каймĕ, улталамĕ. Пĕр иккĕленмесĕрех калама пултаратăп: «Муркка – шанчăклă юлташ!»

### Çемье пурри — телей

Пирĕн çемье пысăк: атте, анне, йăмăк тата шăллăм. Манăн анне – Олеся Ростиславовна. Вăл килте пĕчĕк шăллăма Никитăна пăхать. Пире тутлă апат-çимĕçпе савăнтарать. Атте – Евгений Витальевич. Вăл хулара çуртсем хăпартнă çĕрте вăй хурать. Йăмăкăм Валерия вара пĕрремĕш класра вĕренет.

Пушă вăхăтра эпир аттепе аннене пулăшатпăр. Пурте пĕрле кăмпана, мăйăра çÿреме кăмăллатпăр.

Эпĕ хамăн çемьепе мăнаçланатăп. Çемье пурри тем пысăкăш телей тесе шухăшлатăп.

***Света ЕГОРОВА.***

Куславкка районĕ,
Энтри Пасар шкулĕ.

## ÇАМРĂК КОРРЕСПОНДЕНТ



### Кам пулас-ши ман ÿссен?

Çĕр çинче пин-пин тĕрлĕ ĕç. Вĕсенчен чĕре хушнине мĕнле суйласа илмелле-ши? Ÿссен кам пулмалла-ши? Çак ыйтусем юлашки вăхăтра пуç тавра çаврăнма тытăнчĕç. Пĕрре манăн учитель пулас килет пек, сăнÿкерÿçĕ ĕçĕ те килĕшет. Ташă ăсти пулас шухăш та пур.

Мĕншĕн-ха мана çак ĕçсем интереслентереççĕ? Сăнÿкерÿçĕ тĕнче çине урăх куçпа пăхать. Ыттисене хăй курнă илеме уçса парать. Çынсене савăнтарать, таврари хитре вырăнсене сăнÿкерчĕкре кăтартать.

Эпĕ ташă кружокне çÿретĕп. Сцена çинче ташлатăп. Тĕрлĕ ташă конкурсне те хутшăнатăп. Çакă пĕтĕмпех мана ташă ăсти пулма шухăшлаттарать.

Учитель профессийĕнче вăй хуракана эпир пĕрремĕш класранах пĕлетпĕр. Вăл пире шкул пĕтеричченех вĕрентсе, пулăшса пырать. Тĕрĕс çул çине тăма хистет. Манăн та ачасене вĕрентес килет. Çавăнпа çак професси илĕртет мана.

Хăшне суйлас-ши? Ку ыйтăва хуравлама çăмăл мар-çке.

***Валерия ЕГОРОВА.***

Муркаш районĕ,
Кашмаш шкулĕ.

### Юля Чернова – чи маттурри!

Саккăрмĕш класра вĕренекенсемпе Светлана Петровна Никитина, чăваш чĕлхипе литератури учителĕ, Михаил Федоровăн «Арçури» поэми тăрăх «Çĕлтăр сехечĕ» вăйă урокĕ ирттерчĕ. Ыйтусене хуравласа Юля Чернова, Валерий Шайманов, Александр Кондратьев, Даниил Павлов, Коля Христофоров, Коля Выросов, Лиана Васильева чи нумай балл пухрĕç. Вĕсем малалла выляреç. Тăваттăмĕш тур хыççăн вара виççĕн çеç юлчĕç: Даниил Павлов, Саша Кондратьев, Юля Чернова. Михаил Федоров Хурапха ялĕнче çуралнине лайăх пĕлеççĕ ачасем. Юлашки турта çак сăмахри саспаллисенчен тĕп падежри япала ячĕсене çырчĕç. Кам нумайрах сăмах тупать – çавă çĕнтерет. Юля Черновăна çитекенни пулмарĕ. Вăл çĕнтерÿçĕ ятне тивĕçрĕ. Маттур!

Вăйă пурин кăмăлне те кайрĕ. Уроксене ăмăрту мелĕпе йĕркелени вара ачасен вĕренес туртăмне, тăрăшулăхне ÿстерет.

***Вероника БАХИТОВА.***

Патăрьел районĕ,
Пăлапуç Пашьел.

### Тăван шкул хăй патне туртать

«Тăван шкул яланах хăй патне илĕртет. Вĕрентекенсемпе курса калаçас, тепĕр хут вĕсен урокĕсене ларса ачалăха таврăнас кăмăл пысăк. Паха опыт пухнă fära çыннăмăрсем сĕнÿ-канаш пани те çунат хушать...» – теççĕ кашнинчех шкула практика иртерме килнĕ студентсем.

Яланах ăшшăн кĕтсе илсе, малашнехи пурнăçра ăнăçу сунса ăсататпăр вĕрентекен профессине алла илме ĕмĕтленекенсене. Пирĕн çула суйласа илнишĕн хĕпĕртетпĕр те. Вĕсен шучĕ вара сахал мар...

Ачасем ĕçри пĕрремĕш утăмĕсене тăван шкултах туни хамăра тав сăмахĕ калани пекех. Нумай та вăхăт иртмерĕ-ха, Анна Шайманова Вера Кузьминична Мешкова вĕрентекен патĕнче акăлчан чĕлхи, Лариса Васильева Лариса Васильевна Кузьмичева патĕнче истори, обществознани предмечĕсемпе хăйсен пĕрремĕш урокĕсене ирттерчĕç. Халĕ вара учитель профессине алла илнĕскерсем тĕрлĕ шкулта ачасене пĕлÿ параççĕ.

Кăçал та И.Н. Ульянов ячĕллĕ ЧПУн 4-мĕш курс студентки Ольга Храмова тăван шкула практикăна килме кăмăл турĕ. Вăл кĕçĕн классенче Пăлапуç Пашьел шкулĕнче вĕреннĕ, 5-11 классенче вара Шупашкарти Г. Лебедев ячĕллĕ лицейра ăс пухнă. Маттур хĕр журналист профессине алла илесшĕн. Вĕренÿ планĕпе килĕшÿллĕн вĕсен шкулта та практика иртмелле.

Анлă тавракурăмлă, юрра-ташша ăста студентка ачасемпе кĕске вăхăт хушшинчех пĕр чĕлхе тупрĕ. Шанса панă 5 тата 7 классенче чăваш чĕлхипе литератури урокĕсене кăсăклă та усăллă ирттерчĕ. Пиллĕкмĕш класра вĕренекенсем вăл хавхалантарнипе тĕрлĕ юмах инсценировкине те лартрĕç. Хăйсем те юмахсем çырса пăхрĕç. Спринсян Семен, Бахитов Алексей, Светлана Матюшкина, Настя Соколова тата ыттисем те хăйсен ролĕсене чăн-чăн артистсем пекех выляреç.

Ольга Михайловна «Халăх сăмахлăхĕ» темăпа ирттернĕ вăйă урокĕ вара ачасене питĕ килĕшрĕ. Урок пуçламăшĕнче вăл шăрантарнă юрра тĕлĕнсе итлерĕç пиллĕкмĕшсем.

Урока хатĕрленсе ачасем ваттисен сăмахĕсене пуçтарчĕç, тупмалли юмахсемпе паллашрĕç, тĕрлĕ юмах-халап нумай вуларĕç. Урокра вара хастаррăн тупăшрĕç. Оксана Алексеева сăпка юррине кăмăла каймалла юрларĕ.

«Асамат кĕперĕ» ушкăн капитанĕ Семен Спринсян анлă тавракурăмĕпе палăрчĕ. «Туслăх йывăççи» ушкăна ертсе пыракан Света Матюшкина та тавçăруллă, «Çĕлтăрсене» те сÿнме памарĕ Степанида Степанова. Хăйсен ушкăнĕсен ячĕсенче те тарăн шухăш пытарнă вĕсем, çакна еплерех хавхаланса пĕлтерчĕç ертÿçĕсем. Ыйтусене те тĕрĕс хуравларĕç, конкурссенче те маттуррăн тупăшрĕç ачасем. Тăхтавсенче те канăç памарĕç вĕсем студенткăна. Темĕн çинчен те ыйтса пĕлчĕç.

«Пĕрремĕш утăмсем çирĕппĕнех пусăнасшăн мар, айккинчен пăхма çеç вĕрентекен ĕçĕ çăмăл пек туйăнать. Питĕ нумай пĕлмелле-çке, вуламалла, тишкермелле, тĕрлĕ техника хатĕрĕпе те усă курма хăнăхмалла. Чи кирли – ачасене юратмалла, ăнланмалла. Вĕренÿпе те кăсăклантарма пĕлмелле вĕсене. Мĕн чухлĕ тетрадь тĕрĕслемелле тата! Вĕрентекен урокра артист та иккен, психолог та, тăлмачă та...» – кăмăллăн пĕтĕмлетрĕ практика хыççăнхи шухăшсене Ольга Михайловна.

Хастар студентка кăçал Чăваш Республикин Пуçлăхĕн стипендине те илме тивĕç пулнă. Вăл малашне те малтисен ретĕнче пуласса шанатпăр.

«Пурнăç шăпи таçта та илсе çитерет. Тен, шкулта та ĕçлеме тивĕ. Кунта илнĕ хăнăхусем вара кирек ăçта та усăллă пулĕç», – тет пурнăçăн анлă çулĕ çине тухма ĕмĕтленекен хĕр.

***Светлана НИКИТИНА,***
***вĕрентекен.***

Патăрьел районĕ, Пăлапуç Пашьел.


## ĂШĂ САЛАМСЕМ






Чĕмпĕр тăрăхĕнчи Чăнлă районĕнчи Аслă Нагаткино шкулĕнче 7-мĕш класра вĕренекен **Юля Аюгинăна** çуралнă кун ячĕпе саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, пысăк та çутă телей, ăнăçу сунатпăр. Сан хитрелĕхÿпе ырă кăмăлу пире яланах хавхалантарать. Ыр курса çеç пурăнмалла пултăр!

***Пĕрле вĕренекенсем.***

✦ ✦ ✦

Хисеплĕ ***Зоя Геннадьевна Васильевăна*** 50 çулхи юбилейĕ ячĕпе саламлатпăр. Вăл пединститутран вĕренсе тухсан виçĕ çул шкулта географи предметне вĕрентнĕ. Ун хыççăн Шупашкарта ача садĕнче ĕçленĕ, ĕçре те, çемьере те ырă кăмăлĕпе палăрнă. Мăшăрĕпе икĕ ывăл çуратса ÿстернĕ. Аслă ывăлĕ çара та кайса килнĕ, кĕçĕнни пуçламăш класра вĕренет. Амăшĕн тăрăшулăхĕ юратнă тĕпренчĕкĕсемшĕн тĕслĕх вырăнĕнче. Малашне те çирĕп сывлăх, кунсерен ăнăçупа тату сунатпăр эпир Зоя Геннадьевнăна, ĕмĕчĕсем пурнăçланса пычăр яланах!

***Тăванĕсем.***

✦ ✦ ✦

Раштав уйăхĕн пĕрремĕш кунĕнче тĕнчене хĕпĕртесе, йăл кулса килнĕ пирĕн хаклă **Ирина Александровна Краснова**. Вăл Куславкка районĕнчи Тĕмшер ялĕнче кун çути курнă. Унтанпа 55 çул иртнĕ. Калама кăна çăмăл! Шăпа ăна Етĕрне районĕнчи Ирçе ялне илсе çитернĕ. Вăл нумай çул хушши «Мир» хуçалăхра бухгалтер ĕçне пурнăçланă. Кунтах хăйĕн мăшăрне Славăна тĕл пулса çемье çавăрчĕ. Икĕ ывăл çуратса ÿстерсе пурнăç çулĕ çине кăларчĕç. Халĕ икĕ мăнукĕпе чĕререн савăнса пурăнаççĕ.

Нимĕнрен те ытла хурçă пек çирĕп сывлăх, иксĕлми вăй-хал, куллен ăнăçупа телей сунатпăр.

***Етĕрне районĕнчи Çĕнĕ Етĕрне ялĕнчи тăванĕсем.***



Тантăш
чăваш ачисен хаçачĕ

● **УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ**
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

● **ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:**
**54802** - (çур çула) - Чăваш Республикинче,
**11466** - республика тулашĕнче.

● **Редакципе издатель адресĕ:**
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă."Чувашия" ИПК" ПУП типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● **"ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:**
Тел.: 56-00-23

● **ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОР**
**В.В.ТУРКАЙ**

● **ТЕЛЕФОНСЕМ**

| | | |
|---|---|---|
| директор-тĕп редактор: | | 56-00-67 |
| редактор, çырусемпе тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: | | 28-83-86 |
| шкул ачисен пайĕ: | | 28-85-69 |
| спорт тата экологи пайĕ: | | 56-11-80 |
| право, кăмăл-сипет пайĕ: | | 28-83-89 |
| факс: | (8352) | 56-15-30 |
| бухгалтери: | | 28-83-64 |

● **РЕДАКТОР**
**В.ФЕДОРОВ**

● **НОМЕР ВУЛАВÇИ**
**Л.ПЕТРОВА**

● **КАЛĂПЛАВÇĂ**
**Н.ПЕТРОВА**

● **ЭЛЕКТРОН АДРЕС:**
e-mail: tantas@list.ru

● **ТИРАЖ**
**1266 экз.**
çав шутра Чăваш Республикин тулашĕнче – 191 экз.

● **ЗАКАЗ**
**№ 4552**
Пичете ноябрь уйăхĕн 26-мĕшĕнче алă пуснă.

● **ПИРĔН САЙТ:**
www.hypar.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓟ паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.

# Тăван çĕршыв ăçтан пуçланать?

**Нумаях пулмасть эпĕ Чăваш Республикинчи чи туслă та хаваслă класра хăнара пултăм. Питĕ пысăк вăрттăнлăха уçса малкай класс хăш районта тата хăш шкулта пулнине пĕлтерме явап çитересех пуль. Çапла вара – халĕ пĕлĕр: çав хастарсем Муркаш районĕнчи Юнкăри вăтам шкулта 6-мĕш класра вĕренеççĕ.**

Класс ертӳçине, чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен Ирина Геннадьевна Михалкинăна сăмах парар-ха малтан.

– Класра 21 ача. Вĕсем питĕ туслă – пĕр çемьери пек, çавăнпа пĕр-пĕрне яланах пулăшса пыраççĕ. Ачасенчен саккăрăшĕ «4» тата «5» паллăпа вĕренет. Шкулти пур мероприятие те хастар хутшăнаççĕ, ăмăртусенче малти вырăнсене йышăнаççĕ. Республика тата район шайĕнче irттерекен конкурссенче те палăраççĕ улттăмĕшсем. Экологи тата таврапĕлӳ (краеведени) енĕпе уйрăмах маттур вĕсем. Юнкă шкулĕнче çак ыйтусемпе ятарлă кружоксем ĕçлеççĕ, ачасем унта çӳрени те çитĕнӳсем тума май парать. Кăçал республикăра ирттернĕ экологсен тата краеведсен слетĕнче Юнкăсем 1-мĕш вырăна тивĕçрĕç, чаплă парнесемпе таврăнчĕç. Çитес çул та слета хутшăнма ĕмĕтленеççĕ 6-мĕш класра вĕренекен Кристина Илугина, Надежда Михалкина, Сандра Ильина, Сергей Кудряшов маттурсем, – паллаштарчĕ класс ертӳçи нимĕнле ĕçрен ӳркенмен, темле йывăрлăха та парăнман ачасемпе.

Çакна та палăртар: Юнкă шкулĕнчи экологи тата таврапĕлӳ кружокĕсене шăпах Ирина Геннадьевна ертсе пырать. Ачасен республика шайĕнчи çитĕнĕвĕсенче унăн тӳпи пысăк.

Маттурккасемпе калаçнă-паллашнă май Юнкă шкулĕнчи 6-мĕш класс мĕншĕн тĕнчери чи тусли те хастарри пулнин вăрттăнлăхне те уçăмлатрăмăр. Вĕсем иккен çут тĕнчери чи чаплă ялсенчен – Юнкăран, Çармăçкассинчен, Пĕрремĕш Май выçăлккинчен, Кăпасран пуçтарăннă. Тăван ял илемĕ, атте-анне юратăвĕ çитĕнӳсем тума, тăрăшса вĕренме хавхалану та хăват парса тăраççĕ. Çавăнпа тăван ялĕсен элчелĕхĕсене (посольствисене) йĕркелесе чун юратнă тăрăх-кĕтес çинчен тĕрленчĕк çырма ыйтрăм улттăмăшсенчен. Паллаштарар пуль «Тантăш» тусĕсене элчелĕхсем хатĕрленĕ документсемпе.

– Эпир Пĕрремĕш Май выççăлккинчен виçĕ ача



çӳретпĕр. Пирĕн ял Юнкăран 7 çухрăмра ларать. Унта 2 урам: Майăн 1-мĕшĕн касĕ тата Вăрман касси. Пирĕн ял Юнкă тăрăхĕнче чи çамрăкки. Иртнĕ ĕмĕрĕн 20-мĕш çулĕсенче никĕсленнĕ вăл. Кашни çулах майăн 1-мĕшĕнче выççăлккăра ял кунне ирттертпĕр. Ытти çĕрте пурăнакансем те тăван тăрăха çитме тăрăшаççĕ. Шупашкартан чăваш эстрада юрăçисем те килсе концерт кăтартаççĕ.

Çутçанталăк хитре пирĕн таврара: Çичĕ пĕве ытамĕнче выртать выççăлккă. Çулла эпир шыва кĕме çӳретпĕр, хĕлле сăртсем çинчен çунашкапа ярăнма тухатпăр. Пĕвесенче вак касса пулă тытакансем нумайăн пуçтарăнаççĕ. Хуларан та килеççĕ пулăçсем. Çĕнĕ çулта эпир, ачасем, пĕр-пĕрин патне хăнана çӳретпĕр. Муркаш районне çитсен эсир те хăнана кĕрсе тухăр. Пĕрле пулла кайса килĕпĕр!

**Пĕрремĕш Май выççăлккин элчелĕхĕн секретарĕ Елизавета ДМИТРИЕВА.**

– Эпир вара Кăпасра пурăнатпăр. Тăван çĕршы-



вăн Аслă вăрçинче пуç хунисене асăнса лартнă палăк пур пирĕн ялта. Кашни çулах майăн 9-мĕшĕнче эпир, Кăпассем, унта пуçтарăнатпăр, çапăçу хирĕнчен таврăнманнисене аса илетпĕр, вăрçăпа тыл ветеранĕсене саламлатпăр. Ялта клуб та пур. Унта Василий Терентьев ĕçлет. Ӳркенмест вăл, ачасене юрлама вĕрентет. Меркурий Борисович Ягунов композитор та тухнă Кăпасран.

Пилорама та ĕçлет пирĕн ялта. Ăна Алексей Ильин тытса тăрать. Кăпас ачисем спорта питĕ юратаççĕ! Ялта 9 пĕве. Пысăк пулăсем ĕрчеççĕ вĕсенче. Питĕ шултăра! Çак тăрăхра тек ниçта та çук ун пеккисем. Мухтанатпăр эпир хамăр ялпа! Эсир те килсе курăр пирĕн пата.

**Кăпас элчелĕхĕн секретарĕ – Сандра ИЛЬИНА.**

– Çармăçкасси ялĕнче кам пулман – вăл чăваш тĕнчине курман! Пирĕн ялта клуб тата икĕ лавкка пур! Урам те иккĕ: Мир касси тата Уй касси, вĕсене асфальт сарнă. Ял вĕçĕнче ферма вырнаçнă. Вăл – лашасен, сурăхсен, сыснасен тата хурсен ăшă та çутă «керменĕ». Автобуссем те çӳреççĕ пирĕн яла. Чăрăнуран инçех те мар склад çурчĕ, вăл ял архитектурине пуянлатать. Тепĕр паллă вырăн – уйри киремет çинче ӳсекен пысăк йывăç. Ял тавра 8 пĕве. Çулла вĕсем патĕнчен ача-пăча татăлмасть. Ял ачисем спортпа туслă. Вĕсенчен Павлик Селюшкинпа Дима Михалкина чăн малтан асăнмалла. «Тантăш» тусĕсен килсе курмаллах пирĕн яла!

Çармăçкасси элчелĕхĕн секретарĕ – Надежда Михалкина.

– Тĕнчери чи хитре ял, паллах, Юнкă ятлă, унăн чи илемлĕ касси вара – Тĕп урам (Центральная). Ял витĕр юхса иртекен Юнкă ахаль те хитре ялăн сăн-сăпатне тата та чиперлетет. Юханшыв çыранĕсемпе, урамсенче нумай йывăç ӳснĕрен вăрман пекех курăнса ларать тăван ял.

Тĕп урамра пирĕн иккĕмĕш тăван кил – пысăк та ăшă шкул вырнаçнă. Юнкăра çуралнă Спиридон Михайлов-Яндуш этнограф ячĕпе хисепленет вăл. Пирĕн шкулта чаплă музей та пур.

Ялти чи хисеплĕ вырăн – Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче пуç хунисене асăнса лартнă палăк. Çĕнтерӳ кунĕнче шкул ачисем унта чечек кăшăлĕсем хураççĕ. Вăрçă ветеранĕсенчен Павел Григорьевич Илугин çеç чĕрĕ. Унăн мăнукĕ пирĕн шкулта вĕренет.





Юнкăра культура çурчĕ, ял тăрăхĕн администрацийĕ пур. Шкулпа юнашар чиркӳ лартаççĕ. Туссем, пирĕн яла пырса курмасăр чунăр мĕнле чăтать-ши?

**Юнкă элчелĕхĕн секретарĕ – Кристина ИЛУГИНА.**

Ачасем тăван шкулне мĕнле юратни пирки ыйтма та кирлĕ мар. Мĕншĕн тесен çак тăватă ялăн – Пĕрремĕш Май выççăлккин, Кăпасăн, Çармăçкассин тата Юнкăн илемĕ тата асамĕ шăпах шкулта пĕрлешсе чечекленет. Çапла пуçланать Тăван çĕршыв.

***Владимир СТЕПАНОВ.***

● "ТĂВАН ЯЛĂМ ÇАПЛА ПУÇЛАННĂ!"

# Услапа Нурăса çутă малашлăх кĕтет



Ĕлĕк-авал Нурăс ялĕнче (халĕ Вăрнар районне кĕрекен Калинино) Нурăс (Норус) ятлă улпут пурăннă. Унăн ултă ывăл пулнă. Ывăлĕсем ÿссе çитсен ашшĕ вĕсене çапла каланă: «Акă сире пĕрер ĕне. Камăн ĕни ăçта куркăк çыртать – çавăнта эсир кил-çурт çавăратăр». Çапла ку таврара ултă ял пулса кайнă.

Услапа Нурăса (Ослаба) Нурăс улпутăн Услап ятлă ывăлĕ никĕсленĕ. Яла унăн ятне панă: Услап – Услапа.

Услапа ялĕ пирки Станислав Гурьевич Отрыванов (1948 çулта Вăрнар районĕнчи Мачамăшра çуралнă) «Тучи над рекой Хирлеп» кĕнекинче çапла çырса кăтартнă: «Ял ячĕ вăл вырнаçнă вырăнтан пулса кайнă. Ун çывăхĕнче «Ăвăслă лап» пулнă. Кĕскен каласан вăл çапла илтĕннĕ – Ăслапа – Услапа – Ослаба. Вырăнти халăх пыл хурчĕ нумай ĕрчетнĕ. Паянхи кун та çывăхра «Хуртлă кĕпер» – Пчелиный мост – тени пур. Услапасем ял пуçласа яракансем Тумпăрса, Лимĕрсе тата Эртюк ятлă çынсем тесе те шутланă.

Халăхра çапла калани те пур. Çак тăрăхра Услап ятлă вăрă-хурах çĕмĕрттерсе çÿренĕ. Ватăлсан киревсĕр ĕçпе аппаланма пăрахнă та çырмара çурт лартнă. Вырăх-чĕрлĕх туянса таврари хресченсене тарçа тытнă. Çакăнтан «Услап ялĕ» – Услапа (Ослаба) пулса кайнă».

Услапан хушма ячĕ те пур – суеç. Ăçтан тухнă-ха вăл? Ваттисем каланă тăрăх яла палламан çын килсен хăйне кирлĕ çынна çур кун шыранă тет. Пĕри ял варрине, тепри тепĕр вĕçне суйса янă ăна. Кирлĕ çынна шыраса çур кун иртсе кайнă. Хайхи хăна кунтан ятлаçса, тарăхса тухса кайнă. Таврари ялсенче Услапана «суеç» теме пуçланă. Паянхи кун та вĕсен суясси пĕтмен-ха. Ун пек çынна ку тăрăхра: «Услапасем пек суятăн» е «Эсĕ Услапа çав – суеç», – теççĕ.

Архив документĕсенче Услапа Нурăса пĕрремĕш хут 1719 çулта асăннă, Иккĕмĕш Нурăс тесе палăртнă.

Тăван ялăн сăн-сăпачĕ сулсерен çĕнелсе, улшăнса пырать. Урамсенче çĕлен пек авкаланса асфальт çул выртать. Касхине ял Шупашкар урамĕ пекех илемлĕ. Тикĕс çулăн икĕ енĕпе хунарсем çутатаççĕ. Çуртсене çутçанталăк газĕ кĕртнĕ. Пĕлтĕр çĕнĕ лавкка уçăлчĕ.

Пушă çуртсем те çукпа пĕрех ялта. Çынсем кашни çулах капмар та илемлĕ çĕнĕ çуртсем çĕклеççĕ. Эппин, Услапа пуласлăхĕнче иккĕленÿ çук.

***Екатерина ПОЗИНОВА.***
Вăрнар районĕ,
Услапа Нурăс.

**ПИРĔН ТАНТĂШ**

# Тракторпа та çÿреме пĕлет Зоя!

**Кашни ача хăйĕн тăван шкулĕн чысне хÿтĕлеме, ăна çÿллĕрех шая çĕклеме тăрăшать. Çавăнпа кирек мĕнле мероприятие, вăйă-конкурса хастар хутшăнать. Шăп çавăн пеккисен йышне кĕрет те ĕнтĕ вуннăмĕш класра вĕренекен Зоя Соловьева.**



«Пиллĕк» паллăсемпе çеç ĕлкĕрсе пыраканскер миçе конкурса, викторинăна хутшăнманши? Грамотăсемпе дипломĕсем те тем чухлех унăн. Анчах вăл çак çитĕнÿсемпе кăна лăпланса лармасть, малашне те тĕрлĕ енпе тупăшса мала тухассишĕн ĕмĕтленет. Ара çакă пурнăçра та кирлĕ пулать-çке кайран. Çирĕп тĕллевлĕ пулни халĕччен никама та хур кăтартман-ха, усă кăна кÿнĕ. Зоя вара хăйĕн тĕллевĕсем патне çирĕп утăмсемпе çывхарать.

Химипе биологи предмечĕсене ытларах килĕштернине палăртрĕ вăл. «Мĕншĕнши?» – тесе ыйтсан «Эпĕ аслă шкула медицина енĕпе вĕренме каясшăн», – терĕ йăл кулса. Паллах, унта кĕме çăмăлах маррине ăнланать вăл. Çавăнпа халех тăрăшать. Нумайрах пĕлес тесе, пушă вăхăт тупăнсанах алла кĕнеке тытать. Чи юратнă кĕнекисем – вырăс тата чăваш çыравçисен произведенийĕсем. Уйрăмах Юрий Скворцовăн «Хĕрлĕ мăкăнь» повеçĕ килĕшет ăна. «Çак хайлавра автор сăнарсене психологи тĕлĕшĕнчен еплерех сăнлани уйрăмах чуна пырса тиврĕ», – пайларĕ хăйĕн шухăшне Зоя.

Шкулти предмет конкурсĕсене хастар хутшăнаканскер районпа республикăра иртекеннисенчен те юлмасть. Ÿкерчĕксен, алĕçсен конкурсĕсенче пĕрре мар тупăшнă вăл. Сăвă илемлĕ вуласа та малти вырăнсем йышăннă пике. Унсăр пуçне спортпа та ачаранах туслă Зоя. Гимнастикăпа тата акробатикăпа кăсăкланать. Килĕнчех хăй тĕллĕн, интернетрен уроксем пăхса, хусканусем тăвать.

Чун киленĕçне вара мĕнре тупнă-ши пултарулăскер?

– Çулла кÿлĕ хĕрринче вăлтапа ларма кăмăллатăп, – пĕлтерчĕ Зоя. – Пулăра хама лăпкă туятăп, пур шухăш та йĕркеленет. Ачаш çил шыва майĕпен хумхантарать, шыв çийĕн вĕтĕ пулăсем выляççĕ... Эпĕ вара вăлта хулккине пĕр куç илмесĕр сăнатăп... Чи ырă самант маншăн çакă, – тет Зоя шухăшĕпе кÿлĕ хĕррине вĕçнĕн.

Ялти пикесем пур ĕçре те маттур çав. Ав, пулла кайма та юратаççĕ, футболла та арçын ачасемпе пĕр тан выляççĕ. Зоя вара тракторпа та çÿреме пĕлет! Тĕлĕнмелле мар-и-ха? Хурçă утăн рульне еплерех тытма, пăркалама ăна ашшĕ вĕрентнĕ. Халĕ вара кирек мĕнле ĕçре те Зоя трактора уттарма пултарать.

– Ун пек аттене те çăмăл-çке, – тет вăл кăмăллăн. – Утă е улăм турттарнă чухне вăл тиет, эпĕ вара руль умĕнче.

Çапла, вулакансем, халĕ камран тĕслĕх илмеллине пĕлетĕр пуль тетĕп.

Ырă кăмăллă та сăпайлă, çав вăхăтрах çирĕп чунлă та хастар чăваш хĕрачи тем пирки те ĕмĕтленме юратать. Халĕ вара чи çунатлă ĕмĕчĕ унăн – шкултан лайăх вĕренсе тухасси, малашне аслă пĕлÿ илсе юратнă профессипе ĕçлесси.

***Нина ЦАРЫГИНА***.
Комсомольски районĕ,
Кĕçĕн Çĕрпÿел.

# Полицейски ĕçĕ йывăр та хисеплĕ

Куравра ачасем тĕрлĕ-тĕрлĕ экспонатсемпе паллашрĕç. Вĕсене тытса пăхма та май килчĕ. Кайран вара ертÿçĕсем хăйсен презентацийĕпе тыткăна илчĕç. Унта маттур полици ĕçченĕсем хăйсен пурнăçне сăнласа кăтартнă. Шкул ачисем питĕ тимлĕн пăхса мăнаçланса ларчĕç, уйрăмах арçын ачасем. Савăнăçлă пай пĕтнĕ хыççăн аудиторисене уйăрса ячĕç. Кĕçех аудиторисенче полици ĕçченĕсем ăсталăх урокĕсем ирттерчĕç.

– Пирĕн полици шкулĕсене вĕренме кĕрес тесен çирĕп сывлăх пулмалла, шкулта лайăх вĕренмелле. Çаксем пĕр-пĕринпе питĕ тачă çыхăнура. Ăслă пулсан та сывлăх хавшакрах çын чупаймасть е нормативсене пурнăçлаймасть. Юлашки вăхăтра нормативсене пурнăçлакансем питĕ сахал, çакă вара спортпа туслă пулманнине пĕлтерет ĕнтĕ. Çавăнпа вĕренĕр, физкультура урокĕсене ан сиктерĕр. Полици шкулĕн курсанчĕсем пĕрремĕш курсра 11500 тенкĕ стипенди илеççĕ, юлашки курсра вара 23500 тенкĕ таранах илме май пур, – хăйсем пек хастар пулас тесен мĕн тумаллине ăнлантарчĕç ертÿçĕсем.

– Тÿлевсĕр вĕрентеççĕ-и вара? Е мĕн чухлĕ те пулин çавах тÿлемелле? – интереслене ыйтрĕ гимназири пĕр хĕрача.

– Паллах, тÿлевсĕр. Курсантсем валли пурăнмалли те пур, апат та çитереççĕ. Анчах мĕнле те пулин айăппа кăларса яма тăрсан пур укçине те каялла тавăрас пулать: апатшăн та, пурăнмаллишĕн те, стипендине те, – тесе каласа пачĕ Шалти ĕçсен министерствин ĕçченĕ.

Тепĕр ăсталăх пÿлĕмĕнче ачасене пур наци çыннине те хисеплемеллине, пуринпе те пĕр пек çыхăну тытмаллине, хăш-пĕр чух çакăн пек сăлтав хирĕçĕве кĕртсе янине пĕлтерчĕç.

– Пуринпе те туслă пурăнмалла çав, – терĕç ачасем те.

Тата нумай аудиторире чылай кăсăк япала пулса иртрĕ. Ачасем интересленсе те интереслĕ çÿрерĕç ăсталăх урокĕсене.

Юлашкинчен вара кинологи службин ĕçченĕсемпе вĕсен йыттисем, Буянпа Ялта, тĕрлĕ-тĕрлĕ ăслай кăтартрĕç. Хăйсен пултарулăхĕпе, хастарлăхĕпе полицин ятарлă отрячĕ те паллаштарчĕ.

– Питĕ вăйлă, питĕ вăйлă иртрĕ! – терĕç савăнăç тапса тăракан вĕренекенсем.

***Кристина БАЙБАТОРОВА.***



*Шупашкарти 5-мĕш гимназире «Маттур полицейски» акци иртрĕ. 300 çын ытла хутшăнчĕ уява. Программăна Шалти ĕçсен министерствин ĕçченĕсем ертсе пычĕç.*

## Тĕлĕнмелле лайăх çын...

Манăн анне Катя ятлă. Вăл вăтăр сакăр çулта. Ырă, илемлĕ, ĕçчен, тирпейлĕ çын. Заводра юрист пулса ĕçлет. Тĕлĕнмелле лайăх манăн анне. Нихăçан та суймасть, никама та улталамасть, сăлтавсăр вăрçмасть. Анне мана лайăх ӳстерет: хăй пекех ĕçчен, ырă, тирпейлĕ пулма вĕрентет. Эпĕ унран тĕслĕх илетĕп.



*Костя МАЛАШИН.*

Çĕнĕ Шупашкар,
13-мĕш шкул.

## Вăл ăслă та ĕçчен, ырă та хаваслă

Манăн аннене Светлана тесе чĕнеççĕ. Вăл ăслă та ĕçчен, ырă та хаваслă. Мана йывăрлăхра яланах пулăшать.

Эпир аннепе кăткăс задачăсем шутлатпăр, кĕнеке вулатпăр. Канмалли кунсенче тăтăшах театрта пулатпăр. Эпĕ хам та аннене пулăшатăп: савăт-сапа çăватăп, урай шăлатăп, кил-çурта тирпейлетĕп.

Пушă вăхăтра мана анне çĕлеме, кукăль пĕçерме вĕрентет. Эпĕ унпа мăнаçланатăп. Аннене питĕ юрататăп!

*Виолетта ЧИРЦКОВА.*

Çĕнĕ Шупашкар,
13-мĕш шкул.

## Тавтапуç!

Кашни этемĕн çĕр çинче
Анне пĕрре, çĕршыв пĕрре.
Кун-çул телейĕ вĕсенче
Çиçет хĕрӳллĕн ĕмĕрех.

*Николай ХУТАР.*

Анне – пирĕн тĕнче. Вăл – пурнăç илемĕ, чи пĕрремĕш сăмах. Вăл пирĕншĕн тăрăшать, вăй-халне шеллемест. Анне юнашар пулсан шухăшсăр ачалăх, ырă самантсем, ăслă сĕнӳсем пирĕнпе пĕрле утаççĕ. Çак сывăх çыннăмăр пирĕншĕн ылтăнран та хаклăрах. Эпĕ ăна чĕререн юрататăп. Вăл маншăн – чи хитри, чи ăсли, чи юратни. Унăн пичĕ яланах сар хĕвел пек çиçет, сивĕ вăхăтра чуна ăшăтать. Манăн пуçра çакăн пек сăвă йĕркисем çуралчĕç:

Аннене эп юрататăп,
Хыттăн-хыттăн ыталатăп,
Ăшшăн-ăшшăн чуп тăватăп,
Çепĕç сăмахсем калатăп:
Эсĕ çутă сар хĕвел пек
Ăшăтатăн чунăма.
Эсĕ хĕрлĕ кĕлчечек пек
Илĕртетĕн куçăма.
Çул уçса пыран умра.
Иксĕлми эс ман чунра.
Ăслă канаш эс паратăн,
Ăшă сăмахсем калатăн.

Анне мана çул кăтартса пырать. Йывăрлăхра хăйĕн çепĕç аллипе ачашлать те пулăшу килнĕнех туйăнать. Вĕçех иртет, çынсем килеççĕ те каяççĕ, анне яланах пирĕнпе пĕрле.

Хăш чухне тăванăма ăнланмасăр кӳрентерни те пулкалать. Темле пулсан та эпĕ аннене питĕ юрататăп. Ăна пулăшма тăрăшатăп.

Эпĕ унпа мухтанатăп, нихăçан та кӳрентерес мар ăна. Тавтапуç!

Ачасем, упрăр, хисеплĕр, пулăшăр аннĕрсене!

*Мальвина МИТРОФАНОВА,*
*8-мĕш «г» класс.*

Вăрнар районĕ,
Вăрнарти 2-мĕш шкул.



*Виктория ИВАНОВА (Елчĕк районĕ, Таяпа Энтри шкулĕ) ӳкерчĕкĕ.*

## Юратнăскерĕм

Манăн анне Светлана ятлă. Унăн кăмăлĕ ячĕ пекех çутă та ырă. Вăл садикре воспитатель пулса ĕçлет. Анне – чи çывăх тусăм. Вăл мана яланах пулăшма тăрăшать, маншăн кулянать. Эпĕ те ăна пулăшатăп: урай шăлатăп, чашăк-тирĕк çăватăп.

Пĕррехинче, аннен çуралнă кунĕнче, кĕтмен парне тăвас терĕм. Вăл ĕçрен килнĕ çĕре чечек татса кĕтĕм, куччененç хатĕрлерĕм. Анне шутсăр хĕпĕртерĕ.

Эпĕ ăна питĕ юрататăп, яланах савăнтарма тăрăшатăп.

Юрататăп сана, анне,
Мухтанатăп санпа, анне.
Эс пурришĕн тĕнчере
Савăнатăп чĕререн.

*Ульяна АНДРЕЕВА,*
*2-мĕш класс.*

Шупашкар районĕ,
Ишек шкулĕ.

## Пысăк телей

Анне... Пуриншĕн те мĕн тери хаклă та çывăх çын! Çут тĕнчене килнĕ калаçма пĕлмен пепкене анне сăмахсăрах ăнланать. Эсĕ мĕн çинчен шухăшланине, мĕн пирки ĕмĕтленнине, мĕншĕн куляннине, савăннине, санăн мĕн ыратнине – пĕтĕмпех пĕлет анне. Вăл пире пĕрремĕш утăм тума пулăшнă. Малтанхи сăмахсем калама вăхăт çитсессĕн чĕкеç чĕлхи пилленĕ. Анне пире кĕнеке тĕнчипе паллаштарнă, юмах каласа тата сăпка юрри юрласа çывăратнă. Пире лайăх вĕренме, ĕçе юратма, ваттисене хисеплеме ăс парать.

Манăн чи çывăх çыннăм Ольга Александровна Ашмарина ятлă. Вăл Куславкка хулинче 1979-мĕш çулхи çĕртме уйăхĕн 5-мĕшĕнче çуралнă. Шкул пĕтернĕ хыççăн Самарăри педагогика университечĕн математика факультетне вĕренме кĕнĕ. Ун хыççăн Кĕçĕн Таяпари шкулта математика предметне вĕрентме пуçланă.

Аннен ырă кăмăлĕ, ĕçри вăр-варлăхĕ, çын хушшинчи хисепĕ пире вăй хушать, ун пек пулма хистет. Пушă вăхăтра пире анне компьютер вăрттăнлăхне вĕрентет, тĕрлĕ конкурссене хутшăнма пулăшать. Кашни çулах эпир çемьепе тĕрлĕ вырăна канма кайма тăрăшатпăр, çакă пирĕн тавракурăма анлăлатать.

Вăл – пирĕн кун çути, хĕвел ăшши, чи пысăк телей. Юрататăп, аннеçĕм, сана! Санпа мухтанатăп, савăнатăп, хама пуринчен те телейлĕрех туятăп. Чунтан юратнине пĕтĕмпех калама сăмах та çитмест. Туту яланах култăр, куçусенче савăнăç çиçтĕр, хуйхă-суйхă аякра çӳретĕр. Пире вĕрентсе каланă сăмаххусем яланах вырăнлă.

*Валерия АШМАРИНА,*
*7 класс.*

Елчĕк районĕ,
Кĕçĕн Таяпа шкулĕ.

### Эс пурришĕн савăнатăп

Эп анне пурришĕн савăнатăп,
Тĕнчере хама пуян туятăп.
Ун чĕри хĕвел пек ăшăтать,
Вăл пире ачашшăн çупăрлать.

*Саша ЧЕРНОВ,*
*5-мĕш класс.*

Патăрьел районĕ,
Пăлапуç Пашьел шкулĕ.

### Ку вăл манăн хĕвелĕм

Ирпе ирех тăрать те
Тӳрех ĕçе пуçăнать.
Питне-куçне çăвать те
Ĕне сума вăл васкать.

Кĕтĕве кăлармалла,
Апатне пĕçермелле,
Пахчана та тухмалла –
Пур çĕре ĕлкĕрмелле.

Ачасем, пĕлес пулать,
Сăмах кам çинчен пырать?
Ку вăл манăн хĕвелĕм –
Ырă-ырă аннеçĕм.

*Мария ЧЕРНОВА.*

Улатăр районĕ,
Суйкăн шкулĕ.

### Анне

Кам пире чунтан юратать?
Кам кашни ир вăратать?
Пире лăпкать, йăпатать,
Кирлĕ чухне вăл ятлать?
Кам кĕпе-йĕме çăвать?
Хăш чухне ăна юсать?
Апатне те хатĕрлет,
Пĕçеркке те çитерет?
Анне!

*Елена ЛЫСОВА.*

Улатăр районĕ,
Суйкăн шкулĕ.

## Пирĕн те ун пек пуласчĕ



Манăн анне, Ольга Владимировна Ильденеева, кил-çурт ăшшине тытать. Ман шутпа, аннеçĕм чи илемли, пултарулли, маттурри, ăсли. Унăн аллисем чăннипе те ылтăн, вăл тем тума та пултарать. Йĕпсепе те, çекĕлпе те кăсăклă япаласем çыхать. Вĕтĕ шăрçапа илемлĕ картинăсем тĕрлет, хитре чечексем, чĕрчунсем тăвать. Пире шăллăмпа иксĕмĕре тĕрлĕрен конкурссене хутшăннă чухне усăллă канашсем парать, интереслĕ япаласем тума вĕрентет. Çуллахи вăхăтра анне вăрмана çырлана, кĕркунне вара кăмпана çӳреме юратать. Вăл пире час-часах пĕрле чĕнет. Эпир вара çырла-кăмпа татпăр кăна! Пире çутçанталăка сăнама та вĕрентет.

Эпир илемлĕ, интереслĕ самантсене сăнӳкерчĕксене упраса хăваратпăр. Хăна-вĕрле килсен вара сĕтел çинче тĕрлĕрен çырла, кăмпаран тунă пицца, кукăль яланах тулли. Унсăр пуçне анне машинăпа çӳреме те пĕлет. Манăн та анне пек пултаруллă, ĕçчен çын пулас килет. Эпĕ унпа мухтанатăп. Вăл мана çĕнĕ çитĕнӳсем тума хавхалантарать.

Анне, эпĕ сана уяв ячĕпе хĕрӳллĕн саламлатăп. Ырлăхсывлăх, телей, ăнăçу сунатăп.

*Юля ИЛЬДЕНЕЕВА,*
*6 класс.*

Улатăр районĕ,
Суйкăн шкулĕ.

# Атăлпа Урал хушшинче

"Атăлпа Урал хушшинче" проект Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать



# Историрен пуян тăрăхсем... Тыткăнларĕç-çке пире вĕсем!

**– Асатте, итле-ха, асатте, – сăмах çăмхине малалла тăсмасăр ниепле те пултараймарĕ Шурсухал мăнукĕ Тăрăшар. – Эпĕ çак çулçӳревсем хыççăн хама çĕр чăмăрĕ çинчи чи телейлĕ çынсенчен пĕри тесе шухăшлатăп.**

**– Эпĕ те, эпĕ те! – чăтса тăраймарĕ Темтепĕлейкин та. – Эпĕ вĕт... Эпĕ тӳпере вĕçсе çӳременни кăна. Тăван ене çитсенех курни-илтни пирки тусăмсене йăлтах каласа паратăп. Кашни кунпа паллаштарма тăрăшăп. Вăрман уçланкисенче пулнине, чĕрчунсене курни çинчен, тĕрлĕ хулапа, ялпа паллашни пирки те нумай-нумай пĕлтерĕп... Ай, мĕн тери интереслĕ пулчĕ пирĕн вăрăм çул! Самай ывăнтарчĕ, анчах вăл асра юлчĕ.**

**– Мĕн тери маттурсем эсир манăн, мăнукăмсем, маттурсем, – ачашшăн, çепĕççĕн ырласа та мухтаса илчĕ шăпăрлансене аслашшĕ. – Апла пулсан сире пирĕн çулçӳрев килĕшнĕ?**

**– Питĕ-питĕ, асатте, – терĕç арçын ачасем пĕр харăссăн. – Кун пекккине хальччен тĕлленмен те.**

**Кĕçĕннисем пĕр-пĕрне пӳлсе тенĕ пек хăйсен шухăшĕсене уçса пама тăрăшрĕç. Шурсухал кăмăллăн итлесе те тĕлĕнсе тăчĕ. «Чимĕр, тусăмсем, чимĕр, васкамасăр тата ерипен калама тăрăшăр, – асăрхаттарчĕ çамрăксене ватă. – Атту эпĕ сире итлесе те ĕлкĕрейместĕп. Астуса юлас пирки вара калаçмалли те çук...»**

**– Апла пулсан, пепкемсем, хамăрăн çулçӳреве малалла тăсар, – терĕ Шурсухал. – Аякри тăрăха пĕр килнĕ чухне кунти паллă вырăнсене çитсе курмаллах пуль тетĕп. Эсир мĕнле шухăшлатăр?**

**– Урра! – пушшех те хавасланса та çунатланса кайрĕç Темтепĕлейкинпа Тăрăшар. – Эпир яланах хатĕр!**

## И-и, çил вĕрет, çил вĕрет... Чунра пурпĕр ăшă

– Чи малтанах Коми Республикин тĕп хулин Сыктывкарăн паллă вырăнĕсемпе паллашар мар-и? Атьăр апла тăк çав туристсен ушкăнĕпе пĕрле çула тухар.

Чăвашран килнĕ Шурсухал, лара-тăра пĕлмен, темĕнпе те интересленекен Темтепĕлейкин тата пур çĕрте те хастарлăхпа палăракан Тăрăшар çурçĕр республикипе паллашма таçтан та çитнĕ туристсен ушкăнне васкарĕ.

Питĕ тараватă экскурсовод автобусри салона меллĕн вырнаçнă хăнасене çепĕç сасăпа ырă сунчĕ. Автобус çула тухрĕ. «Паян эпир сирĕнпе Сыктывкарăн паллă вырăнĕсемпе паллашăпăр, – терĕ чипер пике. – Республикăн тĕп хули 1586 çулта никĕсленнĕ тесе палăртаççĕ тĕпчевçĕсем. Вăл Сысола юханшыв Вычегдапа пĕрлешнĕ çĕрте ларать. Сыктывкар коми чĕлхинчен куçарсан «Сысола юханшыв çинчи хула» тенине пĕлтерет. Унтанпа нумай шыв-шур юхса иртнĕ. Халь вăл аталаннă хула. Кунта пурăнакансем те килен-каяна яланах тараватă. Хăнасене вырăнти халăх ăшă кăмăлпа çеç кĕтсе илмест, хулан паллă вырăнĕсемпе те паллаштарма тăрăшать. Паллă вырăнсем вара – Сыктывкарăн тĕп пайĕнче. Кунтах хулан историйĕпе çыхăннă вырăнсем те пур. Паянччен патшалăх сыхлакан алла яхăн йывăç çуртсем упранса юлнă. Халĕ, хаклă хăнасем, автобусран тухатпăр та çуран утса паллашса çӳрĕпĕр...»

Хулан историпе çыхăннă вырăнсен лаптăкĕ пысăках мар. Стефан Пермский çветтуй ячĕпе лартнă кафедра соборĕ хулан тĕп лапаменче вырнаçнă. Ăна 1850 çулта тунă пулнă. Анчах иртнĕ ĕмĕрĕн вăтăрмĕш çулĕсенче тĕпĕ-йĕрĕпе аркатса тăкнă. Собора вунăкĕ çул каялла çĕнĕрен çĕкленĕ.



Çак лапамра хула çыннисем уçăлса çӳреççĕ, тĕл пулаççĕ, калаçаççĕ. Çуран утакансем валли сарлака çул та пур. Пысăк уявсенче лашапа, çурçĕр пăланĕпе ярăнас текенсем те пухăнаççĕ. Çĕнĕ çул уявне кунти капăр чăрăш халăха хăй патне пуçтарать.

– Асатте, пирĕн Шупашкарта та кун пек илемлĕ çуртсем пур вĕт? Эпир хамăр вĕрентекенпе класри мĕнпур ача кайса курнăччĕ. Тĕлĕнмелле интереслĕ унта, – сăмах хушмасăр тăраймарĕ Темтепĕлейкин.

– Пур, паллах. Вĕсемпе те паллашма ĕлкĕрĕпĕр. Юрать? – терĕ Шурсухал.

Ача пуçне сĕлтсе илчĕ те ыттисемпе пĕрле экскурсоводăн интереслĕ калаçăвне малалла итлерĕ.

Хулари тата тепĕр асра юлмалли вырăнпа та паллашрĕç çулçӳревçĕсем. Куратов урамĕнчи икĕ çурт хушшинче Кăмпа тăкăрлăкĕ вырнаçнă. Вĕсен хушши пурĕ те вунă сантиметр кăна. Вăрмана кăмпа татма каяс текенсен тулли карçинккасемпе таврăнмалла пултăр тесе урама кăтартакан паллă айĕнчен тухас йăла сыхланса юлнă.




Республикăн Наци галерейине çитсе курмаллах. Унсăрăн хăвна Комире пулнă тесе калаймăн. 1943 çулта тунă управра XVII-XXI ĕмĕрсенчи искусствăсен произведенийĕсем хăйсен вырăнĕсене тупнă.



Сыктывкар тавраш̆ĕнче те курмалли пайтах. Вĕсенчен пĕри Стефан Пермский 1380 çулта коми халăхне тĕне кĕртнĕ Усть-Вымь ятлă авалхи ял. Тепĕр ял та пур, вăл – Ыб. Темиçе пĕчĕк ялтан тăрать. Степановка тата Погост ятлисене те курма килекенсем май пур таран çитме тăрăшаççĕ. Вĕсем çӳллех мар тăвайкки çинче вырнаçнă. Тăвайккин чи çӳллĕ вырăнĕсенче чиркӳсем аякранах илемлĕн курăнса лараççĕ. Шăпах çаксем хăнасене илĕртеççĕ те.



1930 çулта Сыктывкарта патшалăх академи драма театрĕ йĕркеленнĕ. Вăл ватă театрсенчен пĕри. Чи малтанах Виктор Савин театра кăмăллакансенчен ушкăн çеç йĕркеленĕ пулсан, халь кунта профессионал артистсен паянхи кун ыйтăвне тивĕçтерекен театр ĕçлет. Унăн репертуарĕ çуллен пуянланать. Куракансен йышĕ те ӳссех пырать. Коми Республикин музыкăпа драма наци театрĕ 1992 çулта хăйĕн куракан̆ĕсене йышăнма пуçланă та паянччен вăл хăйĕн спектаклĕсемпе савăнтарать. Классика драматургийĕн тĕрлĕ жанрĕпе хатĕрленĕ спектакльсене курма халăх йышлăн çӳрет. Репертуарта ача-пăча спектаклĕсемпе концерчĕсем те пысăк вырăн йышăнаççĕ. Ача сачĕсене çӳрекенсене тата пуçламăш классенче вĕренекенсене валли ятарласа вĕренӳ программи те хатĕрленĕ артистсем. Искусство ĕçченĕсем Коми çĕр-шывĕн музыка культурипе халăх сăмахлăхĕ çинчен шăпăрлансене тĕплĕн каласа параççĕ. Вĕсен чун-чĕрине искусство вăйĕпе тыткăнлама майсем шыраççĕ.



Темтепĕлейкинпа Тăрăшара çурçĕр çил-тăманĕ те, пит-куçа чĕпĕтекен хĕл сивви те хăратмарĕ. Вĕсем Коми Республикин паллă вырăнĕсемпе хаваспах паллашса Чăваш Ене каялла çула тухрĕç. Вĕсен чун-чĕринче калама çук ăшă та канлĕ. Нумай çĕннипе паллашма пултарчĕ виçĕ пĕртăван.

## Ешĕл хула çеç мар, архитектура пуянлăхĕ те пур кунта!

– Каялла пирĕн çул вăрăм пулĕ. Ăшă та хăтлă автобусра канса илĕр. Эпĕ те кăштах тĕлĕрем-ха, – терĕ Шурсухал. Автобус каçхине çула тухрĕ. Ирхине вара ушкăн Йошкар-Олана çитме те ĕлкĕрчĕ.

Кунта та туристсем нумай пухăннă. Ушкăнсем е автобуса ларса, е çуран утса хулан паллă вырăнĕсемпе паллашма тытăнать. Пирĕн маттурсем те аякра тăрса юлмарĕç.

Йошкар-Олана килекен кашни çын пекех чи малтанах Царевококшайск Кремльне çул тытрĕç. Кремль Царевококшайск хулин (Йошкар-Ола 1919 çулччен çакăн пек ятлă пулнă) вăтам ĕмĕрсенчи тĕрме вырăнĕнче ларать. Хулана тĕрлĕ вăрă-хурахран, тăшманран сыхланă йывăç крепость стени паянхи кунччен упранса юлайман. Кремль территорийĕнче хăйне евĕр паллă вырăн чылай. Кунтах Федор Иоаннович патшан палăкĕ пур. Çĕршывра та, тен, тĕнчипе те унашкалли урăх пачах та çук. Шăпах Федор Иоаннович 1584 çулта Царевококшайск хулине никĕслес пирки указ кăларнă пулнă. «Сказание о Царев Граде» уçă курав та ăнăçлă ĕçлет. Унăн экспозицийĕсем хулан вунулттă-çирĕммĕш ĕмĕрсенчи аталанăвĕ пирки тĕплĕн каласа параççĕ. Виçĕ-пилĕк ĕмĕр каярах усă курнă артиллери туппisen реконструкциленĕ экспоначĕсемпе те куравкансем хаваспах паллашаççĕ. Кремль стени çывăхĕнчи тупăсене авалхи ӳкерчĕксене пăхса вăл вăхăтри евĕр шăратса хатĕрленĕ. Çакă та кăсăклă: хула ертӳçисем Кремльте ятарлă лаборатори те ĕçлеттерме палăртаççĕ. Вăл Атăл тăрăхĕнче 8-11 ĕмĕрсенче пурăннă халăхсен культурине тĕпчĕ. Паян Царевококшайск Кремль тĕрлĕ уяв ирттермелли чи хăтлă та интереслĕ вырăн шутланать. Халăх пултарулăхĕн ярмăрккисем иртеççĕ кунта. Пыл спасĕнче килен-каяна çĕнĕ пылпа кашнине хăналаççĕ, икерчĕпе сăйлаççĕ. Сăмах май, чăвашсен паллă поэчĕ Михаил Федоров, «Арçури» балладăн авторĕ, Царевококшайскра ĕçлесе пурăннă. Унăн вилтăприйĕ те çавăнтах.



Бельгири Брюгге хула архитектурин стильне тĕпе хурса Кĕçĕн Кокшага юханшыв хĕрринче вырнаçнă çуртсем аякранах питĕ илемлĕн курăнса лараççĕ. Çак çыран хĕрринче кирек мĕнле çанталăкра та уçăлса çӳреме меллĕ. Юханшыв урлă хывнă кĕпер те хăйĕн асамлă илемĕпе тыткăнлать, палăксем патĕнчен куракансем татăлма пĕлмеççĕ. Кремль çывăхĕнче яланах халăх хĕвĕшет.



Ашшĕ-амăшĕ те, ачасем те театр курма юратни кунта çитсенех лайăх сисĕнет. Йошкар-Олари Пукане театрĕ архитектура пуянлăхĕсенчен пĕри тесен те йăнăш пулмĕ. Ăна Раççейĕн тĕрлĕ хулинче е урăх çĕршывсенче пулса курнисем те кунашкаллипе халĕччен паллашма май килмен теме



пултарĕç. Чăннипех те çапла пулĕ. Шăпăрлансем валли театр артисчĕсем тĕрлĕ спектакль хатĕрлеççĕ. Театра республикăн тĕрлĕ кĕтесĕнчен те вĕренекенсем, кĕçĕннисем хаваспах килсе çӳреççĕ. Тулли кăмăлпа, асамлăх тĕнчине лекнĕн туйса, хаваслăн театрта пулнă хыççăн килĕсене саланаççĕ. Акă мĕнле иккен театр вăй-хăвачĕ!

Ешĕл хула Йошкар-Ола. Тĕрлĕ палăк, скульптура кунта темĕн чухлех. Çармăссем кушака юратнăран çак чĕрчуна халалланă палăк та пур. Çак статуя йывăрăшĕ 150 килограмм. Статуя патшалăх университечĕн территорийĕнче вырнаçнă. Студентсем экзамен ăнăçлă тытсан е диплом ĕçне лайăх хӳтĕлесен кушака тав туса сăмсинчен пырса ачашлаççĕ. Тĕлĕнмелле ырă йăла! Пирĕнпе кӳршĕлле республика çыннисем ĕçчен те маттур! Йошкар-Олана çĕнетессишĕн тăрăшакансене кăна мар, пĕтĕм Раççей хăтлăхĕшĕн вăй хуракансене те халалласа ятарлă палăк пур кунта. Вăл – мăлатук. Çуртсен тăррисене те илемлетме пĕлеççĕ. Вĕсенче аист, ăмăрткайăк, кушак тата ыттисем те хăйсен вырăнĕсене тупма пултарнă.

Оболенский-Ноготков тӳремĕнче пулман турист хăйне Йошкар-Олана çитсе курман пекех туйĕ. Федор Иоаннович патша 1584 çулта çĕнĕ хула тăвас пирки указ йышăннă та Царевококшайска Иван Андреевич Оболенский-Ноготкова янă. Ăна чăннипех те хула никĕслевçи теме пулать. Иван Андреевича чыс, хисеп туса лартнă монумент çӳллĕшĕ ултă метр,



йывăрăшĕ ултă тонна яхăн. Экскурсантсем кунта пулмасăр иртмеççех. Çак тӳремри туппа та республикăри Звенигово хулинче шăратса хатĕрленĕ.

«Пирĕн çулçӳрев вăраха пырать пулин те, эсир ывăнмасса шанатăп, – сăмаха малалла тăсрĕ экскурсовод. – Кашни паллă вырăн вăй-хăват парать, хавхалантарать. Революциччен Царевококшайск ятпа çӳренĕ паянхи Йошкар-Ола сире килĕшрĕ пуль тетĕп. Кунта пĕрре пулса курнă çын хăçан та пулин тепре çитме тăрăшатех. Сире те эпир яланах хапăл».

Мĕн кăна курмарĕç Шурсухал, Темтепĕлейкин тата Тăрăшар! Кашни самант асра юлчĕ. Çулçӳрев дневникĕ те çĕнĕ алçырăвĕсемпе пуянланчĕ, сăнӳкерчĕксен йышĕ те самай ӳсрĕ. «Ну, асатте, мĕн тери ырă та лайăх çын эсĕ пирĕн! Сана куншăн тав туса та пĕтерейрес çук», – терĕç çамрăксем.

– Сире килĕшрĕ пулсан, мана та лайăх, чунра лăпкă, – сăмах çăмхи малалла сӳтĕлчĕ. – Эпир кĕçех хамăрăн çулçӳреве те вĕçлесе пырăпăр. Çитес кунсенче Мордва Республикине çитсе килĕпĕр те хамăр тăван тăрăха таврăнăпăр. Вăхăт иртнĕçемĕн асаилӳ пуххине те сирĕнтен хăшĕ те пулин çыратех ĕнтĕ...»

Виçĕ чăваш хастарĕ каллех вăрăм çула тухма хатĕрленме тытăнчĕ.

*Владимир ФЕДОРОВ (тел. 28-83-86) хатĕрленĕ.*

# Асамлă парне

Хĕрарăмсен кунĕ ячĕпе аннене парне пама шутларăм. Мĕн парнелемелле-ши? Тен, чечек ҫыххи? Анчах та пуш уйăхĕн пуҫламăшĕнче чĕрĕ чечек ăҫтан тупас?

Шутласан-шутласан юмахри Вилĕмсĕр Кащей патне, хам унран кăштах хăратăп пулин те, кайса пăхас терĕм. Унăн пӳртне шыраса тупма ҫăмăлах пулмарĕ, ҫапах та тупрăм-тупрăмах.

Вăл мана курсан тĕлĕнчĕ, ҫапах та савăнсах кайрĕ, манран мĕн сăлтавпа ҫӳрени ҫинчен ыйтрĕ.

– Анне валли парнелĕх чечек шыратăп, – тетĕп.

– Эп чечексемпе туслă мар, сана туратсенчен тунă парне пама пултаратăп, – тет.

– Мана чечек кирлĕ, анне турат тавраш парнелесен ҫиллене тата.

– Апла пулсан вăрмана кай, унта шыраса пăх, – тет.

Вăрмана кайрăм та унта упана куртăм, вăл хĕл каҫипе ҫывăрса тăраннă та хăйне валли апат шыраса ҫӳрет.

– Мĕн шыратăн? – мĕкĕрсе ыйтрĕ вăл.

– Анне валли чечек. Ăҫта тупма пулать, пĕлместĕн-и?

– Киремет карчăкки патне кай, вăл веҫех пĕлет. Унăн пахчинче, тен, чечек тупăнĕ? Анчах та ас ту, нимсĕр-мĕнсĕр унран нимĕн те ыйтса илеймĕн.

Упана тав туса часрах киремет карчăкки патне ҫул тытрăм. Пилĕк-вунă минутран ун патне ҫитсе те тăтăм

Вăл мана курсан пачах та тĕлĕнмерĕ:

– Мĕн шыраса ҫӳретĕн? – терĕ.

– Мана анне валли парнелĕх чечек кирлĕ. Пулăшаймастăн-ши?

– Пĕлместĕп, ют планета ҫыннисем патне вĕҫсе кайса пăх!

Тепĕр эрнерен космоса вĕҫсе кайрăм, аран-аран уйăх ҫине анса лартăм (эпĕ хальлĕхе пĕчĕкрех ҫав, физика вĕренме тытăнман-ха).

– Коля, эсĕ мĕн тума уйăх ҫине вĕҫсе килтĕн? – тесе ыйтать манран уйăх.

– Аннене хитре чечек парнелес тетĕп, ăҫтан тупмаллине пĕлместĕп. Санран пулăшу ыйтасшăн.

Уйăх Ҫĕр ҫинелле пăхрĕ те:

– Эсĕ килне таврăн, ял ҫывăхĕнчи вăрманти уҫланкăрах чечексем пур, – тесе калать.

Ҫĕр ҫинелле пăхрăм та савăнсах кайрăм. Эпĕ чечек шыраса ҫӳренĕ хушăра уҫланкăра чăнах та темĕн тĕрлĕ чечек ӳссе ларнă! Тӳрех вăрмана анса лартăм, пĕр ҫыхă чечек пуҫтартăм. Вăрман патшине парнешĕн тав туса килелле чупрăм.

Тепĕр кун, пуш уйăхĕн саккăрмĕшĕнче, эпир йăмăкпа аннене хитре чечек ҫыххи парнелерĕмĕр. Анне питĕ хытă савăнчĕ, пире тав турĕ.

**Коля ИВАНОВ,**
**5-мĕш класс.**

Хĕрлĕ Чутай районĕ,
Штанаш шкулĕ.



*© Диана ВАНЮШИНА, 4-мĕш класс (Елчĕк районĕ, Таяпа Энтри шкулĕ) ӳкерчĕкĕ.*

# Аннепе иксĕмĕр — туссем

Манăн анне ҫĕр ҫинче чи лайăххи. Эпĕ ăна юрататăп тата хисеплетĕп. Пĕлетĕп, аннене пăхмалла,уншăн тăрăшмалла. Ку манран килнĕ пулсан эпĕ ҫывăх ҫыннăма ĕмĕрлĕх ҫамрăклăх парнелĕттĕм. Манăн яланах унпа пĕрле пулас килет.

Аннене эпĕ питĕ юрататăп, мĕншĕн тесен вăл мана ҫак ҫут тĕнчене кăтартнă, нумай япалана вĕрентрĕ. Кашни конкурсра, олимпиадăра ҫеҫ мар, пурнăҫра та манăн ҫитĕнĕве яланах ĕненет вăл.

Кашни ачана ҫавăн пек анне сунатăп!



**Иван ЯКОВЛЕВ,**
**4 «а» класс.**

Шупашкар,
49-мĕш шкул.

# Парне

**(Юмах)**

Пĕррехинче эпĕ аннене ҫуралнă кунпа саламласшăнччĕ, ăна «Аленький цветочек» ятлă вырăс халăх юмахĕнчи чечеке парнелеме шутларăм. «Ун пек чечек ҫĕр ҫинче ҫук», – терĕ атте.

Итлемерĕм ăна, чечек шырама тухса каяс терĕм. Пирĕн килте пĕр тĕлĕнмелле сехет пурччĕ, ăна ҫемьене асатте парнелесе хăварнă. Чечек пирки ытларах пĕлес тесе вулама пуҫларăм: «Ак ҫакăнта ман умра ҫав чечек пулнă пулсан!» – тесе хам шухăша сасăпах каларăм та ҫак сехет йĕпписем хытă ҫаврăнма пуҫларĕҫ.

Унччен те пулмарĕ, эпĕ темĕнле пӳлĕмре тăратăп иккен. Йĕри-тавра пăхрăм: алăк та пур-мĕн. Ăна уҫас терĕм те хăраса кайрăм: ку пӳлĕм космосра вĕҫет! Шикленнипе алăка шарт хупса лартрăм. Унччен те пулмарĕ алăка такам шаккама пуҫларĕ. Эпĕ хăранипе пĕшкĕнсе лартăм та куҫсене хупрăм. Сисетĕп: алăк шăппăн уҫăлчĕ те мана пуҫран такам ачашлама пуҫларĕ. Куҫа вăрттăн уҫсан ман умра такам анне сăнлăскер тăнине куртăм, анчах тă хăй хӳреллĕскер тата вăрăм хăлхаллăскер, пуҫĕ ҫинче антенна. Ун хыҫĕнче вара ман пекрех хĕрача тăрать.

– Мĕн шыраса ҫӳретĕн? – тесе ыйтать манран антеннăллă пуҫ.

– Юмахри чечеке тупасшăн, анне валли парне кирлĕ.

– Эх, ачам, ачам, ҫăмăлах мар пулин те эпĕ сана пулăшатăп, ҫак пӳлĕмрен тух, – терĕ вăл мана.

– Ӳкетĕп, хăратăп, – тетĕп.

– Ан хăра, эпĕ сана веҫех ăнлантаратăп, – ҫапла каласан эпĕ ним шикленмесĕрех космоса ура ярса пусрăм, ӳкмерĕм.

Вĕсем мана таҫта илсе кайрĕҫ. Пĕр пӳрт патне ҫитрĕмĕр те антенна пуҫ ҫаплаах сăмах хушрĕ:

– Итле эсĕ, тимлĕ итле, хĕрĕм. Ҫав чечеке санăн пайăн-пайăн пуҫтарма тивет. Пĕр пайĕ ҫак ҫуртра, – ҫапла каласан эпĕ пӳрте кĕтĕм. Унта темĕнле пысăк ҫынсем тăраҫҫĕ. Эпĕ алăкран кĕрсенех вĕсем мана ҫине-ҫине ыйтусем пама пуҫларĕҫ. Пур ыйтăвне те тĕрĕс хуравларăм та вĕсем мана чечекĕн пĕр пайне илсе тухса пачĕҫ. Чечек тăрри тупăнчĕ! Ăна илсен пӳлĕмрен тухрăм та – ман умра пысăк тинĕс сарăлса выртать. Унтан темĕнле хитре хĕр тухса тăчĕ:

– Мĕн кирлĕ сана? – ҫемҫе сасăпа ыйтрĕ вăл манран.

Тĕлĕнмелле чечек шырани ҫинчен пĕлтерсен вăл мана:

– Эпĕ сана пулăшма пултаратăп, чечекĕн тепĕр пайне паратăп, эсĕ ҫак тинĕсри пулăсенчен ишсе иртсе кайсан, – терĕ.

– Юрать, килĕшетĕп, – терĕм. – Эпĕ шкултра тата районта иртекен ăмăртусенче яланах малти вырăнсене йышăнатăп, ишме пĕлетĕп.

Хĕр пĕр пысăк пулла ман ума чĕнсе илчĕ, иксĕмĕре тинĕс урлă ишсе каҫма хушрĕ. Ишме тытăнтăмăр та эпĕ кая юла пуҫларăм, хурланнипе макăрма тытăнтăм: «Анне валли тĕлĕнмелле парне тупасси пулмастех-ши вара?»

Сасартăк ман ҫума анне килсе тăчĕ, эпĕ савăннипе куҫҫуле типĕтрĕм те шыв тăрăх вĕҫе пуҫларăм, самантрах пулла хăваласа иртсе те кайрăм. Малти вырăна тухрăм!

Ҫак хушăра тинĕсри хĕр куҫ умĕнчех тӳрех чечек пулса тăчĕ, йăлтăртатма пуҫларĕ. Эпĕ чечек тунине кăлартăм та вĕсем пĕр-пĕрин ҫумне ҫыпҫăнса ларчĕҫ, ман умра юмахри сăнар «Аленький цветочек» йăлкăшса тăрать.

Ҫак самантра куҫа уҫрăм. Эпĕ килтех иккен, аллăмра чечек. Часах анне пӳрте кĕчĕ, эпĕ ăна ҫуралнă кун ячĕпе саламласа хитре чечек парнелерĕм, хам ҫырнă сăвва каласа патăм.

Анне!
Манăн анне чи хитри,
Чи ырри те илемли.
Ун пек хитри ҫук та пуль,
Ун пек ырри ҫук та пуль.
Ирхине ирех тăрать,
Выльăх-чĕрлĕх пуҫтарать.
Апатне лартса ярать,
Пире шкула ăсатать.
«Пиллĕк» илсен савăнать,
«Иккĕ» илсен хурланать.
Лайăх вĕренме хушать,
Ырлăх-сывлăх вăл сунать.

Анне мана ыталаса чуп турĕ, атте вара тĕлĕнмеллипех тĕлĕнчĕ.

Ҫак чечекĕ халĕ те хитре чӳлмекре пӳлĕме илемлетсе ларать.

**Олеся ИВАНОВА,**
**9-мĕш класс.**

Хĕрлĕ Чутай районĕ,
Штанаш шкулĕ.

# Хăҫан ҫывăрать-ши вăл?

Манăн анне Маргарита Николаевна ятлă. Вăл лавккара сутуҫă пулса ĕҫлет. Аннеҫĕм – чи ҫывăх ҫын. Мĕн пĕчĕкрен ачашласа ӳстерет, чирлесрен сыхлать. Ирхине тутлă апат ҫитерсе шкула ăсатать. Лайăх вĕренме, ĕҫе юратма, ваттисене хисеплеме ăс парать. Анне маншăн чи юратнă ҫын. Вăл урок тума та пулăшать, тетрадьсене тĕрĕслет. Эпĕ ҫывăрма выртатăп-ха, унăн вара ĕҫĕ ҫаплах пĕтмест. Эпир апат ҫинĕ хыҫҫăн чашăк-тирĕке ҫăвать, мĕн те пулин ҫĕлет. Хăҫан ҫывăрать-ши анне?

**Павел ЧЕРНОВ,**
**5-мĕш класс.**

Самар облаҫĕ,
Шунтал районĕ,
Палантай шкулĕ.

# Анне, сана халаллатăп!

## Аллисем çемçе те ăшă

Манăн аннен аллисем
Мамăк пек çемçе вĕсем.
Мана ăшшăн ачашлаççĕ,
Минтер пекех туйăнаççĕ.

Аннен ĕçчен аллисем
Тем тума ăста вĕсем:
Ĕне сума, тĕрлеме,
Яшка-çăкăр пĕçерме.

Пĕтĕм çемье пухăнсан,
Сĕтел хушшине ларсан
Анне тутлă çимĕçпе
Хăналать ачисене.

Яшка антарса лартать,
Çăкăрне касса хурать.
Пур çĕре те, тинкерсем,
Çитĕç анне аллисем.

*Татьяна КРУГЛОВА,*
*6-мĕш класс.*
Самар облаçĕ,
Шунтал районĕ,
Палантай шкулĕ.



*© Александр ТРУШКОВ,*
*Шупашкар, 49-мĕш шкул.*

## Вăл пулсан тĕнче хитре

Юрататăп аннене,
Сывлăх пултăр ĕмĕрне!
Ан чирлетĕр нихăçан,
Пултăр пирĕнпе ялан.

Аннесем пулсан анчах
Çил-тăманĕ лăпкăрах,
Сар хĕвелĕ ăшăрах,
Пĕлĕчĕ те çутăрах.

Мухтанатăп аннепе!
Савăнса тапать чĕре.
Вăл пулсан анчах хитре
Пурăнмашкăн тĕнчере.

*Дмитрий СУРИКОВ,*
*7 класс.*
Муркаш районĕ,
Кашмаш шкулĕ.

## Пĕртен-пĕрре

Эс – телей çуначĕ,
Пĕртен-пĕр анне.
Ман ялан пуласчĕ
Санпала пĕрле.

Эсĕ юрататăн
Юмах калама.
Мана пулăшатăн
Ÿкерчĕк тума.

Эпĕ чирлесен те
Эс ялан çумра.
Тутлă апатне те
Пĕçерен кăна.

Вĕрентетĕн эсĕ
Тĕрĕс пурăнма.
Эпĕ ялан хатĕр
Сана пулăшма.

*Елена РОМАНОВА,*
*6 класс.*
Самар облаçĕ,
Шунтал районĕ,
Палантай шкулĕ.

## Юрататпăр

Эпир – аннен пепкисем,
Пĕчĕк-пĕчĕк чĕпписем.
Анне пире юратать,
Яланах телей сунать.
Чирлесен – пăшăрханать,
Ыратсан – лăплантарать.
Эпир ăна юрататпăр,
Ырлăх-сывлăх çеç сунатпăр.

*Кристина СЕЛИВЕРСТРОВА,*
*3 класс.*
Патăрьел районĕ,
Аслă Чемен шкулĕ.



*© Денис ПЕТРОВ,*
*Шупашкар, 49-мĕш шкул.*

## Мĕн парнелес-ши сана?

Пуç таяççĕ чечек çыххисем,
Вăй выляççĕ хĕвел шевлисем.
Кĕрекере пурте тăвансем
Парнелеççĕ хаклă парнесем.
Тĕнчере паян чи чаплă кун,
Иртенпех ташлать, юрлать-çке чун.
Сывлăх та телей сана сунатăп,
Анне, сана чунтан юрататăп.

Мĕн парнелем-ши, анне, сана?
Ман сăмах çитмест саламлама.
Эп сана парнелĕп ялтăр çăлтăр,
Сан çулна ялан çутатса тăтăр.
Ан шывланччăр ăшă куçусем,
Ан шуралчăр санăн çÿçÿсем.
Пуç таятăп сан умра, анне,
Ĕмĕр пурăн пирĕнпе пĕрле.

Анне пур чух лайăх-çке килте,
Анне пур чух илемлĕ тĕнче.
Анне пур чух эп чи пуянни,
Анне пур чух эп чи телейли.
Аннене уксалла илме çук,
Аннене кивçенле илес çук.
Тĕнчере анне пĕрре кăна –
Ăнланса илсемĕрччĕ çавна.

*Татьяна КОТМАКОВА.*
Улатăр районĕ,
Суйкăн шкулĕ.



*© Кристина ПЕТРОВА,*
*Шупашкар, 49-мĕш шкул.*

## Эсĕ хăв чечек

Санăн çепĕç сассупа
Эпĕ киленетĕп.
Анне, санăн ятупа
Астра ÿстеретĕп.

Çăлтăр евĕр чечек пек
Куçусем хĕлхемлĕ.
Аннем, эсĕ хăв чечек –
Çав тери илемлĕ.

*Ирина ХРИСТОФОРОВА,*
*5-мĕш класс.*
Патăрьел районĕ,
Пăлапуç Пашьел шкулĕ.

## Аннене халалласа

Аннеçĕм, çут çăлтăр эс маншăн,
Манас çук эп сана нихăçан.
Пур çĕре çитме хатĕр эп саншăн.
Пул телейлĕ, аннеçĕм, ялан.

Яланах эс ĕçре чупкалатăн.
Ачасем ан вăранччăр тесе
Чĕрне вĕççĕн ирпе эс утатăн
Пире ыр тĕлĕксем пиллесе.

Хĕвел евĕр хитре эс кулатăн
Куллупа çутатса тĕнчене.
Савăнса çулсерен эс сăнатăн
Эпир хăвăрт ÿссе пынине.

Чи юратнă юлташ эсĕ манăн,
Пĕтĕмпех эп шанатăп сана.
Ылтăнран хаклăрах эсĕ маншăн,
Чуна хатĕр эп саншăн пама.

Пулкалать тепĕр чух ятлани те
Хăш чухне итлеменшĕн сана.
Кунран-кун, анне, эсĕ вăрçни те
Пулăшать-çке мана пурăнма.

Япăххи эс сунмастăн, пĕлетĕп,
Ăнланма тăрăшатăп чунтан.
«Пиллĕкпе» «тваттăсем» эп илетĕп –
Хĕпĕртетĕн, анне, эс ялан.

Пурнăçра яланах тем пулсан та
Анне кирлĕ кашни ачана.
Ăнăçу та, хăват та, укçа та
Йăпатаймĕç аннесĕр чуна.

*Анастасия УТКИНА.*
Улатăр районĕ,
Суйкăн шкулĕ.



*© София СИВОЛАПОВА,*
*Шупашкар, 49-мĕш шкул.*

## Кам пур-ши?

Манăн анне пит маттур.
Пултарать пурне те, кур.
Ирхине ирех тăрать,
Апат пĕçерме лартать,
Ĕнене суса кĕрет,
Пире ăш сĕт ĕçтерет.
Чăх-чĕпне тăрантарать,
Шкула кайма вăл васкать.

Ытарайми ман анне
Ачасене вĕрентет.
Чăваш чĕлхи урокне,
Технологи урокне,
Ав, васкаççĕ ачасем.
Питĕ те маттур вĕсем.
Хутран касса ăсталаççĕ,
Çекĕлпе тем те çыхаççĕ.
Пуканесем, акăшсем,
Тĕлĕнтермĕш кайăксем
Халь ларас çÿлĕк çинче
Манăн аннен класĕнче.

Уроксем пĕтсен вара
Киле кайма васкамастпăр.
Чăваш чĕлхи кружокне
Ман анне патне чупатпăр.
Юр юрлатпăр, таш ташлатпăр,
Тĕрлĕ сăвăсем калатпăр.
Шупашкарти артистсем пек
Сцена çинче савăнатпăр.

Хам аннепе мухтанатăп,
Юрататăп, савăнатăп.
Кашни утăмне сăнатăп,
Пулăшмашкăн тăрăшатăп.
Ман анне пек хастарри,
Пултарулли, маттурри,
Пур ĕçе тăваканни
Çут тĕнчере кам пур-ши?

*Светлана СИМЦОВА,*
*7-мĕш класс.*
Самар облаçĕ,
Шунтал районĕ,
Палантай шкулĕ.

## Ан манăр тав тума!

Çут тĕнчере пур анне.
Кашни çыннăн вăл пĕрре!
Упрăр-упрăр аннене –
Ялан пултăр вăл хитре.

Анне апат пĕçерет,
Алĕç тума ĕлкĕрет.
Ачисене ăс парать,
Ыр кун-çул кăна сунать.

Анне пире юратать,
Чирлесессĕн хуйхăрать.
Манас марччĕ тав тума,
Ăшă сăмах калама.

*Светлана МАТЮШКИНА,*
*5 класс.*
Патăрьел районĕ,
Пăлапуç Пашьел шкулĕ.



*© Анастасия АНИСИМОВА,*
*Улатăр районĕ, Суйкăн шкулĕ.*

## Ан кÿрентерĕр

Кÿрентертĕм аннене...
Мĕн тăвас-ши халĕ ман?
Ун салху куçĕсене
Йывăр-çке курма паян.

Лăпкă мар пĕртте чунра.
Каçару ман ыйтмалла.
Ан хурлантăр вăл вара.
Аннене упрамалла!

«Иртмĕп сан сăмаххунтан,
Эсĕ хаклă ылтăнран.
Турăпа та эсĕ тан,
Çутăрах эс çăлтăртан!»

*Семен СПРИНСЯН,*
*5-мĕш класс.*
Патăрьел районĕ,
Пăлапуç Пашьел шкулĕ.



*© Анастасия ПАВЛОВА*
*(Шупашкар, 49-мĕш шкул)*
*ÿкерчĕкĕ.*

## Çепĕç сăнар

Анне алли пит ачаш,
Унăн кăмăлĕ йăваш.
Ăшă кăвак куçĕсем –
Чечек пек хитре вĕсем!

Ырă-çке анне кулли –
Чăннипех чи илемли.
Сасси шăпчăкăнни пек,
Ĕçĕ пăрчăканăн пек.

Мана анне юратать:
Урок тума пулăшать,
Хăш чух вăйă та вылять,
Кирлĕ сĕнÿсем парать.

Тутлă апатпа сăйлать,
Тирпейпе савăнтарать,
Чăлха-нуски те çыхать –
Пур ĕçе те пултарать.

Аннеçĕм шкулта ĕçлет –
Ачасене вĕрентет,
Ăс памашкăн тăрăшать.
Хăй ĕçне пит кăмăллать.
Унăн ĕçĕ пит хисеплĕ.
Чыслă, йывăр тата кирлĕ.
Икĕ теçетке ытла
Вăй хурать тăван шкулта.

Эп аннене юрататăп,
Чун-чĕререн саламлатăп
Анне кунĕ ячĕпе.
Ан чирлетĕр ĕмĕрне!

*Олеся КРУГЛОВА.*
Улатăр районĕ,
Çĕнĕ Эйпеç ялĕ.

## Аннепе телейлĕ эпĕ

Аннене эп юрататăп,
Тав туса чечек паратăп –
Пуринчен хитрисене,
Хам ÿстернĕ вĕсене!

Çывăрма унпа выртатăп,
Ирхине пĕрлех тăратăп.
Юнашар анне пулсан
Çук телейлĕ çын манран!

*Степанида СТЕПАНОВА,*
*5-мĕш класс.*
Патăрьел районĕ,
Пăлапуç Пашьел шкулĕ.

## Ăшă сăмахсем

Ăшшăн-ăшшăн чуптăватăп,
Çепĕç сăмахсем калатăп.
Ах, аннеçĕм, ман анне!
Юрататăп аннене.

Пит маттур-çке ман анне:
Тем те пĕлет ĕçлеме,
Çыхма, тĕрĕ тĕрлеме,
Ăшшăн-ăшшăн пуплеме.

«Ах, маттур-çке эсĕ ман», –
Ыталать мана анне.
Тăрăшатăп эп чунтан
Çăмăллатма ун ĕçне.

*Любовь ДМИТРИЕВА,*
*6-мĕш «г» класс.*
Вăрнар районĕ,
Вăрнарти 2-мĕш шкул.

## Чĕрере те шухăшра

Ах, аннеçĕм, анне,
Эс ялан чĕрере,
Ĕмĕрех пуçăмра,
Тăтăшах шухăшра.

Кунĕпех эс ĕçлетĕн,
Мана ăшшăн кĕтетĕн,
Апатпа эс сăйлан
Лăпкаса çурăмран.

Эп урок тума ларсан
Эс мана пырса пăхатăн.
Йăнăшсем асăрхасан
Ăшшăн, лăпкăн ăс паратăн.

Çывăрма выртсан каçпа
Эс пыратăн ман пата,
Ырă тĕлĕксем сунса
Чуптăван питрен мана.

*Александра БАСНИКОВА,*
*6-мĕш класс.*
Комсомольски районĕ,
Çĕнĕ Мăрат шкулĕ.



*© Наташа СМИРНОВА (Вăрнар районĕ, Вăрнарти 2-мĕш шкул)*
*ÿкерчĕкĕ.*

● МОДА

# Калпак суйлатпăр

Тумтир туяннă чухне пуçа тăхăнмалли пирки те манса каймалла мар. Хăшĕ-пĕри хăйне килĕшÿллĕ çĕлĕк-калпак тĕрĕс суйлама пĕлменнипех сивĕ çанталăкра та çара пуçах çÿрет. Ку вара питĕ сиенлĕ. Пуçа шăнтма юрамасть, çитменнине сивĕ çил, хĕллехи шартлама çÿçе те палăрмаллах сиенлетет. Апла, пуçа ăшăра тытмаллах. Тĕрĕс суйласа илнĕ çĕлĕк-калпакпа илемлĕ те модăпа килĕшÿллĕн курăнар.

1



Гардеробра тĕрлĕ материалтан çĕленĕ, тем тĕрлĕ фасонлă калпак та пур. Анчах вĕсене мĕнле тумтирпе тăхăнмалла-ха? Ку е вăл çĕлĕк хăш тумпа килĕшÿллĕн курăнĕ-ши? Сăмахран, çемçе çипрен çыхнă калпак тăхăнтăр-тăк çÿçе кăштах кăларăр. Кун пек хитререх те çепĕçрех курăнăр. Вăрăм çÿçлĕ пикесен вара хăрах айккине «хÿре» туса пуçтармалла та ăна калпак айĕнчен кăлармалла.

Хулăн çипрен çыхнă калпаксем пуç çинче пысăкрах курăнаççĕ пулин те вĕсем ăшă та меллĕ. Хальхи модăпа тата спорт стилĕпе çĕленĕ курткăпа, ирĕклĕ пальтопа тăхăнсан аван. Енчен те сире романтика стилĕ çывăх тăк, «федора шлепкипе» аван курăнăр. Ăна сапаланă е пушă «хÿре» туса пуçтарнă çÿçпе тăхăнмалла. Темиçе çÿç пайăркине малалла ярсан та килĕшÿллĕ пулĕ.

2



Берет нихăçан та модăран тухмасть. Ăна суйлакансем элегантлă та ачашшăн курăнаççĕ. Берета кăштах хăрах айккинелле ярса тăхăнсан тата илемлĕрех, илĕртÿллĕрех пулать.

Пур калпака та тумтир стилĕпе килĕшÿллĕн суйламаллине ан манăр. Фасонĕпе калпака аса илтерекен ансат калпак туянтăр-и? Унăн вĕçне хыçалалла е малалла усăнтарса тăхăнса çÿрĕр. Дизайнерсем вăрăм «калпаксем» те шухăшласа кăларнă. Вĕсен çĕлĕксенни пекех «хăлхисем» те пур. Çакăн йышши калпаксем уйрăмах çÿллĕ пÿ-силлĕ хĕрупраçсене килĕшÿллĕн кăтартĕç. Вĕсене курткăпа, кĕске кĕрĕксемпе тăхăнсан аван.

Çавăн пекех çакăн пек калпака кăштах хăрах айккине лартса тăхăнма пулать. Унăн вăрăм вĕçĕ хулпуççие лексе тăтăр. Хăйне евĕрлĕхе кăмăллакансене вара дизайнерсем çак калпака тĕрлĕ япалапа капăрлатма сĕнеççĕ. Тĕслĕхрен, пĕчĕк шăнкăрав çакса е шăрça çĕлесе.

3



Хальхи модăпа килĕшÿлли – нуски-калпак. Малтанах вăл каччӑсен атрибучĕ пулнă. Юлашки вăхăтра дизайнерсем хĕрсем валли те çак фасонлă калпака çĕлеме пуçларĕç. Тĕсĕсем те вĕсен çутăрах та илемлĕрех.

Чи кирли – ăна çири тумтирпе килĕштерсе тăхăнма пĕлни. Нуски-калпак кĕске сăран курткăпа, çăтă джинс шăлаварпа питех те аван курăнĕ. Мода журналĕсенчи сăнарсем пекех пулас тесен вара çак япаласемпе пĕрлех илемлĕ ботильон, хура куслăх тата хăйне евĕрлĕ стильлĕ пысăк сумка илĕр. Спорт стильне кăмăллакансем, ку калпак шăп сире валли. Пĕр иккĕленмесĕрех туянма пултаратăр.

4



Çавăн пекех ăна хăйĕнпе пĕр тĕслĕрех шарфпа, перчеткепе тăхăнаççĕ. Илемлĕ мамăк тир çухаллă куртка-пальтопа та вăл килĕшÿллĕ пулĕ.

Хăйне евĕр прическкăллă пикесем те ку калпака иккĕленмесĕрех суйлама пултараççĕ. Ун чухне эсир чăнах та ыттисенчен уйрăлса тăрăр.

Çак калпака темиçе тĕрлĕ тăхăнма май пур. Ăна кăштах хăрах айккинелле чалăштарăр та çамка çине антарăр. Ун чухне сапаланă çÿçе калпак айĕнчен кăларма ан манăр. Е калпака хыçал енчен пĕр-икĕ хут хуçлатăр, унăн хĕррисене шалалла тирпейлĕн хутлатса хурăр. Вăл пуçа çăтă тытса тăмалла.

ХАМĂР ХУШĂРА

# Мĕне пĕлтерет-ши тĕлĕк?

**Хаçатăн иртнĕ номерĕнче ку е вăл тĕлĕк мĕне пĕлтернине пичетленĕччĕ. Хальхинче те хăш-пĕр пĕлтерĕшпе паллашар-ха. Кун пирки редакцие килекен çыру авторĕсем те тилмĕрсех ыйтрĕç.**



Тĕлĕкре **конькипе ярӑннине** курсан пĕр-пĕр пуçарса янă ĕç ăнмасан та пултарать. Асăрхануллӑрах пулăр. Ĕç ăнтăр тесен ăна васкавлăн пурнăçлама тăрăшăр. Ăнсăртран ларă-тăру улшăнсан çухалса ан кайăр, шухăшланине пурнăçа кĕртĕр.

**Вăрăм коридорпа пыни** – эсир суйласа илнĕ çул çинче кĕтменлĕхсем сиксе тухасса. Анчах вĕсем лару-тăрăва пурпĕрех улăштараймĕç. Çакă сире пуринчен те асăрханма, сисчĕвленме, тимлĕрех пулма хистĕ çеç.

**Кушак** тĕлĕке кĕни – юратнă çын сиртен сивĕнессе. Çывăх вăхăтрах вăл урăххине тупма пултарать.

Тĕлĕкре **лифтпа ярӑннине** куртăр-и? Вăл çÿлелле каять тĕк – пĕр-пĕр ĕмĕт пурнăçланасса, аялалла анни вара ăнăçу вăхăтлăха сирĕнтен пăрăнасса.

**Тилĕ** курни юлташăрсемпе, пĕлĕшĕрсемпе тимлĕрех пулма хистет. Вĕсен хушшинче сирĕн шанчăкăра тивĕç мар çынна тÿрех асăрхăр. Унпа ытлашши сăмах ваклама ан тăрăшăр.

**Çутнă лампăллă люстра** – сывлăх çирĕпленессе, кĕтмен савăнăç пуласса, пуçланă ĕç е мероприяти ăнăçлă вĕçленессе. Сÿнтернĕ лампăсене вара хирĕçле пĕлтерĕшпе ăнланмалла.

**(Малалли пулать)**.

● ИЛЕМ

Спортпа туслă çын вăй-халлă та илемлĕ. Çапла-и? Кĕлеткене çителĕклĕ тимлĕх уйăрни питĕ пĕлтерĕшлĕ. Пурин те яштака пÿ-силлĕ пулас килет-çке. Хăш чухне вара кĕлеткен уйрăм пайĕ, сăмахран, хырăм кăшт пысăкрах пулни канăç памасть. Кун пек чухне хырăм мышцисене çирĕплетекен хусканусем туса пăхма сĕнетпĕр.



## Çак гимнастикăна кашни ир тăвăр

1. Çурăм çине выртса урасене хуçлатăр. Алăсене пуç айне хурăр, чавсасене айккинелле ярăр. Маччаналла пăхăр. Кĕлеткен çÿлти пайне çĕклĕр. Çав вăхăтра сывласа илĕр. Аялалла аннă чухне сывласа кăларăр.
2. Çурăм çине выртăр, алăсем – купарча айĕнче. Урасене тÿрĕ тытса кăштах çĕклĕр. Çĕкленĕ чухне сывласа кăлармалла, антарнă чух сывласа илмелле.
3. Çурăм çине выртăр та урасене чĕркуççи тĕлĕнче хĕреслĕр. Алăсем ĕнсе çинче. 1-мĕш хускануri пекех сывласа кĕлеткен çÿлти пайне çĕклĕр.
4. Çурăм çине выртса урасене «туркăлла» хĕреслесе тытăр. Кĕлеткен çÿлти пайне сулахаялла, унтан сылтăмалла çавăрăр.
5. Урасене хуçлатăр, алăсем – ĕнсе çинче. Чавсана – малтан пĕрне, унтан теприне – чĕркуççи патне илсе пырăр.

Пур хусканăва та малтанхи вăхăтра 15 хут тумалла. Каярах вĕсен шутне майĕпен ÿстерсе пымалла.

● АННЕНЕ ПУЛĂШАТĂП

## Çĕрулми катлечĕ

**Çимĕçе хатĕрлеме çур килограмм çĕрулми, çур стакан рис кĕрпи, 2 çăмарта, 2-3 кашăк тăпăрчă, 2 пуç сухан, петрушка, хăвăра кирлĕ чухлĕ тăвар илĕр.**

Чăмăрла пĕсернĕ çĕрулмие хуппинчен тасатса нимĕрлĕр. Е чĕрĕллех теркăпа хырăр. Рис кĕрпине тăвар хушнă шывра пĕçерĕр. Çĕрулмипе хутăштарăр. Хыççăн ытти çимĕçе ярса пăтратăр. Пулнă хатĕртен катлетсем тăвăр та çăнăхпа йăвалантарăр. Çу янă хĕртнĕ çатмара ăшалăр. Е духовкăра пĕçерĕр.

Ку катлета тăпăрчăсăр та хатĕрлеме пултаратăр.

## «Пĕрремĕш юр» салат

**Салат валли 200 грамм пĕçернĕ чăх какайĕ, 3 пĕçернĕ çăмарта, 80 грамм сыр, 40 грамм (икĕ кашăк) аçтăрхан мăйăрĕ, кăштах вăррисĕр иçĕм çырли тата майонез кирлĕ.**

Çăмартапа какая улăм пĕрчи евĕр турамалла. Сыра теркăламалла, мăйăра вĕтетмелле. Кашни çимĕçе уйăммăн майонезпа, тăварпа пăтратмалла. Сыра кăштах çиелтен сапма хăвармалла. Çимĕçсене сийпе хумалла: какай, мăйăр, сыр, çăмарта. Унтан сыр сапмалла. Варрине çурмалла каснă темиçе иçĕм çырли хумалла. Апачĕ тутлă пултăр!

Нина ЦАРЫГИНА (тел. 56-11-80) хатĕрленĕ.

***Çитес çул Раççейре Литература çулталăкĕ пулĕ. Чăваш Енре ăна чăваш литературин классикне Константин Иванова халалланă. Пирĕн республика Пуçлăхĕ ку тĕлĕшпе ятарласа указ та йышăннă. Çавăн пекех çитес çул чăваш прозаикĕ тата куçаруçи Куçма Турхан çуралнăранпа 100 çул çитĕ.***

***Кузьма Сергеевич Турхан (Сергеев) Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи Пăва уесне кĕрекен Вăрманхĕрри Чурачăк ялĕнче (хальхи Комсомольски районĕ) çуралса ÿснĕ. Н.Гоголĕн «Тарас Бульба» повеçне, К.Симоновăн «Вырăс çыннисем» пьесине, С.Григорьевăн «Вуниккĕмĕш çул» повеçне тата нумай-нумай пысăк хайлава чăвашла куçарнă. Унăн паллăрах кĕнекисем: «Атакăра», «Иван Смирнов пулеметчик», «Йăмраллă ял», «Кĕтне хĕрринче», «Сĕве Атăла юхса кĕрет», «Çĕпĕрти тĕл пулусем».***

***Паянтан сире «Сĕве Атăла юхса кĕрет» романăн «Туй» сыпăкĕпе паллаштарма тытăнăпăр. Çитес вăхăтра çак романăн «Çÿллĕ иккен Хусан хÿмисем» сыпăкне те вулама пултаратăр.***

# Туй

**Куçма ТУРХАН**



Урасметăн пÿрчĕ пысăк, темиçе пÿлĕмлĕ, çапах та паян халăх унта та шăнăçаймасть. Тĕрĕссипе, хăнасемпе туй çыннисем йышлах та мар, курма пынă çынсем вара – лăк тулли.

Алăк патĕнче, кăмака çумĕнче – хĕрупраçсем, вĕсем кунта мĕн пулса иртнине сăпайлăн, пăртак вăтанарах пăхса тăраççĕ; хĕрсен ик айккипе тата кăмака сакки çинче – каччăсем, вĕсем пĕр вăхăтрах туй курма та, хăйсем хушшинче шÿт тума та, хĕрсемпе ашкăнкаласа илме те ĕлкĕреççĕ; сентре çинче тата кăмака хыçĕнче – пĕве кĕменнисем е пачах вĕтĕршакăр ача-пăча.

Туй хĕрмеллипех хĕрсе çитеймен-ха, ташă-юрă пуçланман. Ўсĕр çын кунта хальлĕхе ушкăнĕпе те пĕрре çеç – Карамыш, Чалăм крепоçĕнчен килнĕ мăрса. Çуртапа хăйă çутинче унăн тÿпеттейсĕр шакла пуçĕ кĕлпе тасатнă йĕс тирĕк пек çуталса тăрать. Мăрса хăрах аллипе Урасмета хулран çатăртаттарса тытнă, тепĕр аллинче автан тукмакĕ. Урасмет ытларах Тукайпа калаçма тăрăшать, пăçăртанпах ĕнтĕ ăна тем пирки хĕрÿллĕн те çине тăрса ÿкĕте кĕртет.

Ку таранччен вĕсем кĕрекере виççĕн çеç ларатчĕç, акă, тĕпелти алăк уçăлчĕ те, хĕрарăмсем унтан хĕп-хĕрлĕ пусма кĕпе тăхăннă Патиреке çавăтса тухрĕç. Пÿрт тулли халăх пуçтарăннине курсан Патирек малтан, хăранипе, шартах сикнĕ пек пулчĕ, унтан никам çине те пăхма хăяймасăр, шăппăн çеç кĕрекене кĕрсе вырнаçрĕ, аллисем чĕтренине сиссе вĕсене часрах сĕтел айнелле пытарчĕ.

– Ăхă, пит якши, хайхи авланакан джигит та тупăнчĕ, – асăрхарĕ ăна ÿсĕр Карамыш. – Мĕн, чирлерĕн-им эс, Батирек дустым?

– Хĕне кайрăм çав, – терĕ айăплă çын сассипе Патирек .

– Сан вырăнта чирлеме юрамасть. Сана паян хĕрпе, çамрăк арăмпа, хĕве хупаççĕ! Э-э, ун пек чух чирлеме юрать-и вара?

Патирек вăйсăррăн ал сулчĕ те пуçне пĕксе чалăшшăн тепĕр еннелле çаврăнса ларчĕ.

– Хĕрÿ хитре-и? – хăпма пĕлмерĕ унран мăрса. – Ма кăтартмастăн-ха ăна эсĕ? Е хăвăн пекех асат хуçнăскер-и, çавăнпа кăтартма вăтанатăн-и? Эс ан вăтан, шăллу пек маттур пул. Сан шăллу – мăрса пулмалли çын, хăюллă, хастар. Çавăн пек пул, Батирек!

Карамыш яланхи йăлипе хыттăн тата вăкăр пек мĕкĕрсе калаçрĕ, çавăнпа ун сăмахĕсене туй курма килнисем те нумайăшĕ илтсе юлчĕç. Патирекĕ вара мăрса çумĕнче, йĕп çинче ларнă пек, ниçта кайса кĕме пĕлмерĕ. Ним тăвайман енне вăл ал айĕнчи черккине ярса илчĕ те мăрсан сăйлама пикенчĕ.

Паçăр, халăх куçĕ умне курăннă чух питне кăшт юн тапса тухнăран пулас, Патирек сăнран ытла начарах та марччĕ, ак халь, пăлханни иртсе кайсан, ун пичĕ шуратнă пир пек тăрса юлчĕ. Хăйĕн çине хĕрлĕ кĕпе тăхăнни ку шурă тĕсе тата та ытларах палăртса тăчĕ.

Карамыш сĕтел хушшинчен тухнă ĕнтĕ. «Ăçта унăн хĕрĕ, иптешсем? Эсир мана хĕрне кăтартăр!» – тесе хĕрарăмсен ушкăнĕнче эрлешсе çÿрет. Тахăшĕ ăна кĕлете, хĕр туйĕ пынă çĕре, çул кăтартса ячĕ, пăртак тăрсан вăл унтан хушпу тăхăнса килсе кĕчĕ. Пĕр-пĕр инке-арăм ăна шÿт туса кĕлетре Эрнепи вырăнне темле хитре хĕре е туй арăмне кăтартнă пулас, Карамыш ăна мухтама пикенчĕ.

– Ай-ай, хĕрÿ якши сан, Батирек! – ун çине пырса таянса чирлĕ çынна кăштах йăвантарса ямарĕ вăл. – Çав тери якши хĕрача тупма пултарнă. Кала-ха, хăвах суйласа илтĕн-и ăна е Урзамат абзы тупса пачĕ-и?

Патирек ăна хăлхаран пăшăлтатса тем ăнлантарчĕ, татах эрех ĕçме сĕнчĕ, анчах виçерен тухнă мăрса нимпе те чарăнма пĕлмерĕ.

– Çук, эсĕ авланмастăн, дустым, Уразмат авланать. Ахаль пулсан, ахаль пулсан эсĕ çакланатчĕ. Ăнлантăн-и эс эпĕ мĕн каланине? Ай-ай, хĕрачу хитре вара санăн, чăн-чăн бикем. Бичĕсем çырла пек, куçĕсем, куçĕсем вара – икĕ çут çăлтăр. Ай-ай, хитре хĕр тупса панă сан шăллу!

Пÿртре, пĕчĕк ача макăрнă евĕр, шăпăр сасси янăраса кайрĕ. Хĕрме ĕлкĕрнĕ туй каччисем юрă пуçларĕç.

Урасмет хуçа пулнă май чи малтан ташласа парас тесе урай варрине тухрĕ, кăтра çÿçне лăстăр! силлесе илчĕ, урай тавра йăпăр-япăр чупса çаврăнчĕ. Анчах вăл пĕччен ташлама майлă мар терĕ пулас, такама шырама тĕпелелле кĕчĕ. Çынсем ăна кам кирлĕ пулнине çийĕнчех сисрĕç – вăл хăйĕнпе пĕрле ташлама Тукай хĕрне Нухрата чĕнесшĕн ĕнтĕ. Чăнах та, паçăр Нухрат тĕпелте тăратчĕ, Урасмет кĕçĕр унпа хăйĕн туйĕ пирки калаçса татăлма ĕмĕтленетчĕ, ав мăрса хĕрĕ тухса тарма та ĕлкĕрнĕ иккен. Пулать те мăн кăмăллă хĕрача! Ларасчĕ çакăнта, туй курасчĕ, ун тем тесен те пытанса çÿремелле, пуç çаптармалла, куçран пăхтармалла!

Хуçа нумай ташламарĕ, Нухрат хĕр туйне кайман-и тесе кĕлете тухрĕ. Кунта самаях сивĕ, хĕрарăмсем шупăрсемпе лараççĕ. Темиçе туй арăмĕ шупăр тăхăнман, анчах пăхсах паллă – вĕсен çийĕнче сахалтан та виçĕ хут кĕпе.

Хĕрарăмсем вара те чăнах та ĕçсе ÿсĕрĕлнĕ, те Урасмет умĕнче çавăн пек кăтартасшăн – тайкалана-тайкалана, алри сĕлкисене сула-сула туй юрри мар, темле ĕçкĕ юрри юрлаççĕ.

Улăх, терĕç, хурăнăн ай тăррине
Ешĕл çулçисене суйлама.
Пачĕç тулли курка ай сим пылне
Пирĕн çамрăк пуççене сăнама...

– Ăçта сирĕн çуралнă хĕрĕр, ăçта Эрнепи? – терĕ Урасмет çиллине шăнараймасăр. – Эсир, мĕн, туя пăсас тетĕр-и?

– Ан пăшăрхан, шăллăм, халех илсе килеççĕ, халех илсе килеççĕ, эпир кайса пĕлтĕмĕр ĕнтĕ, – чĕвĕлтетрĕ пĕр туй арăмĕ Урасмет хулĕнчен уртăнса. Çавăнтах вăл аллисене саркаласа юрласа ячĕ:

Хура вăрман хыçне шур юр çунă,
Хура сăсар тухса йĕр хывнă.
Хура сăсар йĕрне ай йĕрлес мар,
Атте-анне ятне ай ярас мар.

– Инке, эсир çапах та туй юрри юрлăр, – каламасăр тÿсеймерĕ Урасмет.

– Э-э, шăллăм, туй юрри юрлăпăр, туй юрри юрлăпăр. Эс каях, хĕр туйĕшĕн ан кулян. Пурне те йĕркеллĕ иртерĕпĕр, – терĕ çамрăк арăм. Урасмет хыççăн алăк хупăнсанах хăй тепĕр курка симпыл ĕçсе ташша ячĕ.

Çынсен йыснăш çăмха пек,
Хĕве чиксен кĕрес пек,
Пирĕн йысна упа пек,
Çынна курса çыртас пек. И-и-их!

Ăна хирĕç Урасметăн тепĕр инкĕшĕ шыв пек юхса тухрĕ, хăрах урипе кĕлет урайне тарст! çеç тапрĕ.

Хоп, Сĕнтĕр Сентепи!
Варлă-варлă Эрнепи,
Халь те качча кайман-и,
Халь те ача туман-и?
Халех качча каять пуль,
Кайсан ача тăвать пуль,
Ачи мăрса пулать пуль,
Ўссен хăйне хĕнет пуль...

Алăк хыçĕнче итлесе тăракан Урасмет лач! сурчĕ те аккинелле пăрăнчĕ.

Çук, ку инке-арăмсем ырра мар алхасаççĕ. Паянхи туй ăна пĕрре те килĕшмест. Пуçланасса та вăл пачах та чăваш туй йĕркисем хушнă пек пуçланмарĕ. Ĕмĕрхи йăлана пăхăнса иртересс пулсан тем тесен те туя килте мар, тăвансен патĕнче е ют ытта тумаллаччĕ, çураçнă хĕре йышăнма картишĕнче шыльяк хатĕрлемеллеччĕ, хĕрĕн хăйĕн хунямăшне, пулас упăшкине, тăванĕсене кĕпе тăхăнтартмаллаччĕ. Ара, Патирекĕн хăйĕн те туя юлан утпа каймаллаччĕ, Эрнепие килтен пĕтĕм халăх умĕнче илсе тухмаллаччĕ.

Юрать-ха Альтук инке хăйĕн кутăн хĕрне ÿкĕте кĕртме пултарсан. Ăна илсе килеймесен е туй вăхăтĕнче вăл асăрписер хăтланма тытăнсан? Вара алманчăн Тукайпа Карамыш умĕнче намăс курасси çеç юлать. Каялла пÿрте кĕрсен Урасмет чи малтан çамрăксен хушшинче Ахтупая, Эрнепие тăван тивекен Иливана шыраса пăхса çаврăнчĕ. Вĕсем курăнмаççĕ. «Шĕкĕр турра, апла пулсан килсе çитеймен-ха, – шухăшларĕ алманчă хăй ăшĕнче. – Кĕçĕр килсе тухмасан ыран вăл каччăсем маншăн пĕрре те хăрушă мар. Тепĕр тесен паян та ним шикленмелли те çук: икĕ мăрса куçĕ умĕнче туя пăсма хăтланмашкăн вĕсем ухмаха тухман пулĕ-ха. Çапах та кĕçĕр туя шăв-шавсăр иртерсен аванрах пулĕ».

Хăйне кăшт та пулин лăплантарас тесе алманчă Элентее чĕнсе илчĕ.

– Мĕнле, лешсем таврăнман-и? Курмарăн-и эс вĕсене? – халиччен пек мар йăвашшăн калаçма тăрăшрĕ вăл тарçипе.

– Таврăнман. Тин кăна кайса тĕрĕслерĕм.

– Апла кĕрсе ĕç. Пăртак тăрсан тепре çитсе кил вара. Элентей хуçа хăй пÿрте чĕннишĕн савăнса умлă-хыçлă темиçе курка ĕçрĕ те хыçалти пÿртри вырăнĕ çине те аран-аран çеç çитсе выртрĕ.

– Эй, мĕн çÿремелли пур, таврăнмаççĕ вĕсем кĕçĕр, – мăкăртатрĕ вăл хăй тĕллĕн. – Таврăнас пулсан эпĕ иккĕшне та ла-айăх вĕрентнĕ пулăттăм! Ман алла лекчĕр кăна, эпĕ вĕсене кăтартăп! Çук, килмеççĕ çав вĕсем кĕçĕр, хăраççĕ Элентейрен!

Анчах Ахтупайпа Иливан таврăннă ĕнтĕ, вĕсем Урасмет улталаса пăрахса хăварнă виçĕ çынпа пĕрле Атăл хĕрринчен ялалла хăпараççĕ.

Хăйсем паян пиллĕкĕшĕ те ăша пĕр хĕлхем апат яман, кунĕпе кĕсменпе ишнĕрен ывăнса йăлтах халтан кайнă, çавăнпа пурте шăп çыртса, пĕр сăмах шарламасăр, çиллессĕн утаççĕ.

Каччăсем укăлча хапхинчен кĕрсенех пĕлчĕç – Турикасра туй пырать. Ку мĕнле туй иккенне кашни хăйĕн чунĕпе сисрĕ тейĕн, пĕри те ним çинчен те ыйтмарĕ. Урасмет пÿрчĕ умне шăппăн çитсе тăчĕç, туй шăй-шайне кăшт итлекеленĕ хыççăн çавăн пекех шăппăн килĕсене саланчĕç.

Пÿрте кĕнĕ-кĕменех амăшĕ Ахтупая апат антарса пачĕ, ывăлĕ Хусана мĕнле кайса килни пирки кăшт та пулин пĕлесшĕн пулчĕ. Ахтупай, хырăм выçнипе выçманнине те маннăскер, амăшне çиллентерес мар тесе пĕр-икĕ кашăк яшка сыпрĕ, вара ыйтăвĕсене илтмĕш пулса пÿртрен тухрĕ.

Пăлтăрта вăл пурнăçри йывăр вăхăчĕсенче хăйĕн чун уççийĕ пулса тăракан шăпăра илчĕ, ун какăрне тăхăнтарса вĕрсе пăхрĕ. Шăпăр чиперех калать. Каччă ăна шăлса тасатса хĕвне чикрĕ.

– Эх, мĕн пулать те мĕн килет, каям-ха эппин туя! – терĕ Ахтупай пĕтĕм ăш-чикĕ вăрканнине ниепле те пусараймасăр. – Хам савни туйĕнче чăм шыва ÿкиччен ташлам!

Вăл савнийĕ сăра ĕçтерес пулсан куркана ярса пама кирлĕ пулать тесе пăлтăрти арча тĕпĕнчен пĕр алтын укçа илчĕ, ăна тăла вĕçĕпе çап-çутă пуличчен тасатрĕ те урампа тăвалла васкарĕ.

Хăй çапах ĕненмерĕ-ха: чăнах, Эрнепиех илсе пачĕç-ши вара Патирек валли? Мĕнле чунпа кайма килĕшрĕ-ши ăна Эрнепи? Алли-урине çыхса илсе кайрĕç-ши ăна Урасмет килне е илĕртсе те улталаса илсе тухрĕç-ши? Ыр кăмăлпа качча тухма пултараймастех ун савнийĕ çав вырăнпа выртакан чирлĕ çынна. Эрнепи чунĕ таса. Ун пек хĕрача çынна улталиччен хăй çине алă хунă пулĕччĕ. «Эх, Эрнепи, Эрнепи! – терĕ вăл хăй сисмен çĕртенех утăмне хăвăртлатса. – Мĕншĕн пурăнас ĕнтĕ халь ман çут тĕнчере? Эсĕ, ман чĕкеçĕм, ман телейĕм, ман пĕртен-пĕр шанчăкăм, усал çынсен аллинче мăшкăл тÿснине курассишĕн пурăнас-и? Мĕншĕн эпир çав териех телейсĕр пулса çуралнă-ши? Ма ун пекех юратса пăрахрăм-ши эпĕ сана, Эрнепи?»

**(Малалли пулать).**

# Хаваслă 2014 самант

## Пуçватмăш



**Ăнлантарни:** Çак ўкерчĕксене пилĕк саспаллирен тăракан сăмахсемпе çырса тултармалла. Кашни хурав пуç патĕнчен тытăнать.

1. Тапăну. 2. Ĕç тумтирĕ. 3. Вĕтĕ чул. 4. Ăна пуçа тăхăнаççĕ. 5. Вăрăм йытă. 6. Одиссей çĕршывĕ. 7. Çирĕп вĕрен. 8. Пўрт пайĕ. 9. Целлофан хутаç. 10. Шетникпе лутка тăванĕ. 11. Ун çинче чăхсем çĕр каçаççĕ. 12. Вăрманти чĕрчун.

## Çăлтăр хыççăн çăлтăр, йăлкăшаççĕ йăлтăр!



1. Тапăну. 2. Пĕр пичкен хĕрĕх кăшăл (туп.юм.). 3. Амăшĕ çине вĕрекен ..., кашкăр кулли пулнă, теççĕ (каларăш). 4. Пирĕн тăрăхри чул. 5. Пушă ... çилсĕр авăрать, теççĕ (ват.сăм.). 6. Тўрĕ пăхса ларса ўкерттернĕ сăн ўкерчĕк. 7. Утă-улăм вырăнĕ. 8. Маугли «амăшĕ». 9. Çăрттанран хăракан пулă. 10. Хими элеменчĕ.

*Çак çаврашкасенче тăватă сăмах шыраса тупас тесен варринчи ункăна мĕнле татăк çырса хумалла-ши? Шыракан тупать теççĕ.*




*Çул çинче тĕл пулакан пĕр пек саспаллисене кăларса пăрахнă хыççăн унта кирлĕ сăмах тăрса юлать.*



## Сăмахкаçмăш



**Ăнлантарни:** Ку сăмахкаçмăшра пĕртен-пĕр уçă саспаллипе усă курнă. Апла тăк ăна шĕкĕлчеме питĕ ансат.

**Сылтăмалла:** 3. Литература жанрĕ. 5. Хваттерти хурт-кăпшанкă. 9. Уçланкăри ... (юрăран). 10. Кăнтăрти йывăç. 12. Пушхир кушакĕ. 13. Çăмăл апат. 15. Йăрă сын. 16. Ăна лаша ури çине çапаççĕ.

**Аялалла:** 1. Наян, услап. 2. Тĕвесен ушкăнĕ. 4. Пушă. 6. Икĕ вĕçлĕ япала. 7. Уфари хоккей команди – «... Юлаев». 8. Ăна тухтăр тăхăнать. 11. Чăваш юрăçи. 14. Пулă.

***Николай КРАСНОВ*** (Йĕпреç районĕ) ***хатĕрленĕ.***